**Чулхула**

Аякран куратăн: палăк
Лартнă Атăл хĕррине.
Ытама илесшĕн Чкалов
Çавракa çĕр чăмăрне.

Балахна çынниййĕ Минин
Килĕшсе Пожарскипе
Çакăнтан-çке çĕнтерӳллĕн
Тухнă халăх çарĕпе.

Шухăша путса утатăн
Эс Каширинсен çуртне,
Чĕрӳпе туйса тăратăн
Вырăс çĕрĕн хăватне.

**Ярославль**

Ярославна, Ярославна,
Валентина Çăлтăрпи,
Çакăнта эс çунатланнă,
Вĕçнĕ паттăр кайăк пек.

Шывĕсем сазан-караслă,
Куян тус -  вăрмансенче.

Сунарта çӳрет Некрасов,
Çĕнĕ сăвă -  чунĕнче.

Собинов! Сассу асамлă.
Халь те тĕлĕнет тĕнче.
Ярославль! Салам тăванлă
Хулари туристсенчен!

**Мускав**

Эс çак сывлăшпа сывланă,
Илтнĕ çакă мусăка...
Ак халь Химкире тăратăн,
Сан умра -- чăн-чăн Мускав.

Галерея илĕртет-и
Е хуçалăх выставки?
Кĕç Останкина çитетĕн,
Уçă саншăн Лужники.

Сăрталла эс улăхатăн
Университет патне,
Юмахри пекех куратăн
Тĕп хулан сăн-сăпатне.

**Санкт-Петербург**

Аслă Петĕр йĕркеленĕ
Неваçи тĕп хулине,
Вал Раççей ятне çĕкленĕ,
Тĕлĕнтернĕ тĕнчене.

Смольнăй умĕпе иртетĕн,
Кĕç кĕрен Эрмитажа,
«Тав сана, ентешĕм», -  тетĕн
Эс Егоров чăваша.

**Хусан**

Акă пысăк элеватор,
Тăрмашать жираф пек кран.
- Хусана çитсе пыратпăр, -
Хыпарларĕ капитан.

Карапне кĕçех вăл чарчĕ.
Пурте утрĕç çӳлелле,
Ватă Кремль патне хăпарчĕç.
Курчĕç паттăр Джалиле...

Тимлĕн сăнаса пыруçăн
Университет çуртне
Асăрхать Ваçça ун уçă,
Илĕртӳллĕ алăкне.

**Ульяновск**

Çак хула ятне çĕкленĕ
Гончаров та Карамзин.
Чăваша вара пилленĕ
Иван Яккăльч, хамăр сын.

Алфавитăмăр çуралнă
Чĕмпĕр ен ытамĕнче,
Иванов та шăрçаланă
«Нарспие» ун çутинче.

Павлов, Кошкинский те Тайăр
Çунат сарнă çакăнтах.
Чĕмпĕре, туссем, пуç тайăр, -
Вал сăваплă яланах.

**Самара**

Аслă Горький такăрлатнă
Çамрăк чух çак çырана,
Короленко та юратнă
Канăççăр Самарăна.

Лев Толстой кунта ĕçленĕ
Чĕринчен сапса кăвар,
Чăвашла кунта пупленĕ

Влас Паймен, Тукташ, Уяр.

...Тахçанччен хăналĕ, усрĕ
Вăтам Атăл тĕп хули -
Анчах чĕнчĕ, кăчăк туртрĕ
Ешĕл тумлă Жигули.

**Саратов**

Сарă тăв... Ваçук тупасшăн
Ик сăмахăн тупсăмне:
Ĕлĕк чăвашсем хуман-ши
Çак хитре хула ятне?

Стенька Разина вал курнă,
Курнă Пугачёв3 çарне.
Тĕнчене тухмашкăн пӳрнĕ
Чернышевский4 ăс-халне.

Шавлăн калаçса ларать вăл,
Сассипе çыран чĕтрет...
...Атăлçи хула Саратов,
Савăнтартăн эс пире.

**Волгоград**

Паттăрсем юнпа шăварнă
Çулăм хыпнă таврана,
Çĕршыва çăлса хăварнă,
Вилĕм кӳнĕ тăшмана.

Улăп евĕр Мамай сăрчĕ.
Ун çине хăпарнăçем
Вася туйрĕ, Вася курчĕ:
Çук, вилмен çак салтаксем!

Йăлтăр-йăлтăр йăлкăшаççĕ
Ылтăн çутипе ятсем,
Ĕмĕр-ĕмĕр пурăнаççĕ
Халăх чĕринче вĕсем.

**Астрахань**

Атăл ирĕк, Атăл анлă,
Анĕ урлă каç килет.
Çывхарать шур акăш майлă
Пăрахут халь Каспие.

Эс пăхса епле ытарăн
Капăр тумлă хулана:
Кĕмĕлрен ярать вăл тарăн
Тымарсем тăп çырана.

Яш ача чунтан сăнарĕ
Аслă шывăн тăрăхне.
Çут шевлеллĕ хум лăпкарĕ
Хавхаланнă чĕрене.

*Юрий Сементер*

**Эпир Российăра пурнатпăр**

Салтак винтовкине çакса
Нумай çĕре çитсе эп куртăм.
Ăшра - нихçан та манмасса
Пурнатчĕ пĕр хăватлă туртăм.
Ăна сисетĕн пĕрмаях -
Хаваслă-и, хаяр-и тапхăр.
Ăна пĕлтерĕ виç сăмах:
Эпир Российăра пурнатпăр.

Ют пылчăк ерчĕ те атта
Часах хăпса ӳксе тасалчĕ.
Кирек хăçан, кирек ăçта
Тăван çĕршывăмăр асраччĕ.

Асраччĕ кăмăллă чĕлхе,
Ун илемне ăçта туятпăр?
Ĕмĕртенпе, ĕмĕрлĕхе
Эпир Российăра пурнатпăр.

Эп йĕтĕн çӳçлĕ çуралман,
Сенкер куçпа эп ялкăшаймăп.
Чăваш сăмахĕ - мулăм ман,
Чĕрempеле те чăвашах эп.
Анчах эп вырăспа танах
Хăюллă пултăм, пултăм паттăр.
Ăшра янратчĕ яланах:
«Эпир Российăра пурнатпăр!»

*Петĕр Хусанкай*

**Сăн укерчĕк**

Стена çинчен пăхатпăр вуннăн,
Тăваткăл кантăк айĕнчен.
Мĕнпурĕ çак ӳкерчĕк юлнă
Мана, тус-тантăш, сирĕнтен.

...Июнĕн ытарма çук ирĕ.
Кĕрлет Тăвайĕнче пасар.
Сасартăк радиопа çитрĕ
Никам кĕтмен усал хыпар.

Çав хыпарпа шăп пулчĕ халăх,

Киле саланчĕ васкаса.
Çав кун, туссемĕр, асăнмалăх
Ӳкертĕмĕр пĕрле тăрса.

Каçпа ял-йыш! вăрçа ăсатрĕ
Аттесене укăлчаран.
Нумайăшĕ пуçне çухатрĕ,
Таврăнаймарĕ вăрçăран.

Каярахпа çĕршыв шăпишĕн
Эпир те çунтăмăр вутра,
Тăван чĕлхен тăван юрришĕн
Ним хĕрхенмесĕр хамăра.

...Стена çинчен пăхатпăр вуннăн,
Тăваткăл кантăк айĕнчен.
Мĕнпурĕ çак ӳкерчĕк юлнă
Мана, тус-тантăш, сирĕнтен.

Эп вăрçăран телейлĕ тухрăм
Эп çитрĕм Çĕнтерӳ кунне.
Аннĕрсене курсан: «Ма юлтăм?»
Тесе те пăхрăм хăш чухне.

Вĕсем мана курсан йĕреççĕ
Аса илсе ачисене.
Час-час кĕрсе тухма чĕнеççĕ
Яла пырсан хăйсем патне.

...Эсир яла таврăнаймарăр
Шыв пек юн юхнă хирсенчен.
Ĕмĕрлĕхех мухтавлă ятăр
Пурнать ял-йышăм асĕнче.
Ятăрсемпе тупа тăватпăр -
Тек вăрçă пулмĕ Çĕр çинче!

*Николай Сандров*

**Палак умĕнче**

Ял варринче шап-шурă палăк...
Çын чарăнать унта çитсен.
Карта... Чечек... Пĕр пĕчĕк алăк.
Чун пăлханать шала кĕрсен.

Мĕн чухлĕ ят унта вулатпăр,
Йăлтах эпир пĕлен ятсем.
Вĕсем камне аван чухлатпăр:
Асаттесем те аттесем.

Тахçан вĕсем пура пуранă,
Ӳстернĕ ешĕл йывăçсем,
Тыр-пул пухса уйра тарланă

Çын тулăх пурăнтăр тесе.

Кайран... тăшмансене аркатнă
Хăрушă пушара кĕрсе,
Пире валли телей упранă
Чакмасăр, çапăçса, тӳнсе.

Ял варринче шап-шурă палăк.
Кунта килеççĕ ачасем.
Вĕсем хавас, ĕçчен, вăй-халлă,
Вĕсем акаççĕ чечексем.

Вĕсем кунта тупа тăваççĕ
Тăван çĕре ялан савма,
Мĕн ĕмĕре тĕллев тытаççĕ
Хăюллă та ĕçчен пулма.

*Вениамин Тимаков*

**Ирхи ӳкерчĕк**

Хĕрлĕ-хĕрлĕ çилхине
Атăлта чӳхет-çке шуçăм.
Çил чупать хĕвел патне,
Варкăшĕ ӳт-пӳшĕн усă.

Атăл çийĕ - вĕт кăтра,
Кăтрисем пит илĕртеççĕ.
Шурă пĕлĕтсем шывра
Шурă ут пек чӳхенеççĕ.

Шурă утсене тытма
Хĕвел ылтăн чĕлпĕр печĕ.
Учĕ тарăнрах чăмать -
Тытаймасть шевле-именчĕк.

Чарлансем шыв çийĕпе
Канлĕн ярăнса вĕçеççĕ.
Пулла курчĕç - çĕмрен пек
Атăла ӳкеççĕ.

Çут хĕвел юман тăрне,
Курăр, хăпарса та ларчĕ.
Хăйĕн йăлтăр ылтăнне
Хир çине сапса вăл ячĕ.

*Георгий Ефимов*

**Кĕре кĕрсен**

Кас-кас вĕркерĕ сулхăн çил,
Вĕлтлетрĕç сарă çулçăсем.
Эппин, кĕр кунĕ çитрĕ-ши?

Таçта та ылтăнах сăнсем.

Çанталăк - иксĕлми талант -
Тĕс сапалать пур таврана.
Курсам, пилеш вутра çунать.
Кам кĕмĕлленĕ хурăна?

Те ал сулса, килме пулса,
Хур кайăк ушкăнĕ иртет.
Уй-хир те юлнă çаралса,
Тупри ун пӳлмере çиçет.

Тӳпе маччи хăш чух таса.
Кĕç капланаççĕ пĕлĕтсем.
Пуçра ĕрчеççĕ çаврăнса
Кăшт тунсăх, çутă шухăшсем!

*Владимир Харитонов*

**Курак тăманĕ**

Тем ырришĕн, тем амакшăн
Те йăли ун çавнашкал -
Хĕл пуçларĕ юр тăкмашкăн,
Юрĕ нӳрĕ, кăпăшка.

Шурă тĕнчере утатăн,
Шурă кун куçа шартать.
Юр кăна умра куратăн,
Юр кăна çаварттарать.

Кураксем, эппин, килеççĕ
Çуркунне хыпарĕпе.
Вăрттăнрах иккен çитеççĕ
Çак тăманăн хӳттипе.

Сас парассăн туйăнаççĕ
Çывăхрах сисмен хутран.
Ахаль мар-тăр тунсăхлаççĕ
Йăмрасем вĕсем çукран...

Вашават сывпуллашать-мĕн
Сивĕ хĕл пирĕнпеле,
Чыс тумашкăн тараватьмĕн
Юлашки юрĕпеле.

Чыс тăвать курак тăманĕ,
Шеллемест вăл ырлăхне:
Курса юлăр тет, ан манăр
Шурă юрăн çутине!

*Геннадий Юмарт*

**Март**

Çерçи пуххи йăмра çинче
Тем канашларĕ,
Пăр-р! саланчĕ.
Çав сасăпа тумла вăранчĕ,
Çинçен юрлать çурт çумĕнче.
Кăвак сăн çапнă лапама
Тӳпе янравĕ илтĕнет -
Çуркуннене концерт пама
Март кĕмĕл чĕлĕх ĕнерет.
Кĕçех, çур кунĕ, юрă пуçлăп.
Сана кĕтсе, куратăн ак,
Дирижёр пек тăрать мăнаçлăн
Çул хĕрринче хура курак.

*Алексей Воробьёв*

**Апрель**

Апрель çаплах пӳрт çамкине çулать,
Тумлам çĕре питрен хытах сăхасшăн.
Тулта - тĕнче нимрен чуста çăрать,
Çĕпри йĕпрет часрах йӳçсе туласшăн.

Апрель: лапра çисе ӳсет илем,
Кунсем хур кайăк карти евĕр шавлă,
Шыва ӳкет сике-сике шевле,
Чунра чăлханнă хĕлĕхсем пăлхавлă.

Апрель каллех мăр-мăр йăваш кушак -
Чун варринех кĕрсе ачашланасшăн.
Хăй йăвинчи кашни хура курак
Сап-сар хĕвел çине пусма ларасшăн.

*Олег Прокопьев*

**Чĕкеç тăманĕ**

Май уйăхĕ.
Хитре çанталăк.
Тӳпе те янкăр. Кăн-кăвак.
Çитес çĕре çитмешкĕн алăк
Яр уçса янă çут тавралăх, -
Туйса, курса таран хăвах.
Чипер пыраттăн эс.
Сасартăк
Пĕр хăмăр пĕлĕт тупăнать.
Малтан вăл пит хăрушах
мар-ха,
Кайран - хĕвел сăнне хуплать.
Унтан, кĕтмен çĕртен,

Шур лĕпĕш
Вĕçме пуçлать талккишĕпех.
Сивве куçса каять кун лĕпĕ:
Сапма пуçлать юр ывçипех.
Чĕкеç тăманĕ!
Унсăр, имĕш,
Çу кунĕ путлĕн пуçланмасть.
Улăх-çаранĕ пултăр симĕс,
Çак тăман çук тăк - ашкăнмасть.
Чĕкеç тăманĕ ăсатать-мĕн
Хĕле кунтан инçе-инçе.
Ун хыççăн çу кунне хăратмĕ
Шур юр пĕрчи вĕçе-вĕçе.

Çав хăмăр пĕлĕт час иртет,
Каллех кулса ярать хĕвел.
Шап-шурăччĕ умра, хирте,
Ак -
Ешĕл тĕс пуçлать кĕвве.

«Чĕкеç килсессĕн ăшă анĕ», -
Пуплетчĕç чыслă ватăсем.
Халь калчасем те аталанĕç, -
Çĕр юлчĕ мар-и нӳр илсе?

*Георгий Ефимов*

**Упăтепе Куслăх**

(Юптару)

Пурна киле суккăрланма пуçларĕ Упăте,
Анчах илтет вăл пĕр тĕлте:
Чип-чиперех курма пулать иккен,
Туян та Куçлăх - сирĕлет инкек.
Улт-çичĕ Куçлăх туянать хайхи.
Апла та тыткалать, капла та пăхкалать,
Лĕпки çине лартать, хӳри вĕçне çакать
Е шăршласа, е çуласа пăхать -
Çук, мĕскĕнĕн иртмест хуйхи.
Кӳренчĕ Упăте: «Çăва патне!
Ухмах итлетĕр-и ухмахăн суййине!
Тыттарчĕç Куçлăх юрăхли çинчен,
Усси пĕр пуслăх çук ун, кĕленчен».
Вара вăл тарăхнă енне
Куçлăхсене çĕре çатлаттарать,
Чăл-пар кăна вак кантăк сапăнать.
Ку тĕслĕхе сын хушшинче те куркалан.
Илес ак - - япали сĕре аван,
Анчах тиркет ăна чухла пĕлмен айван,
Эхер хăй муллăрах пулсан вара -
Хапхи урлах тытса вăрать.

*Иван Крылов*
*Вырăсларан Стихван Шавли куçарнă*

**Йытă çинчен**

Шуçăм çути сăрларĕ
Чăпта таврашне картара,
Йытă ами çăвăрларĕ
Çичĕ хĕрлĕрех çура.

Вĕсене чĕлхипе вăл çурĕ,
Çуларĕ савса вăрахчен.
Юхса тухрĕ ирĕлнĕ юрĕ
Ăшă хырăмĕ айĕнчен.

Каç кӳлĕм, чăхсем пĕр сассăр
Сырса илсен каштана,
Тухрĕ хуçа хавассăр,
Миххе чикрĕ кашни çурана.

Чупрĕ йытă кĕрт урлă,
Юлмарĕ вăл хуçинчен...
Вакă куçĕ хумлă та хурлă -
Чӳхенчĕ шыв нумайччен.

Такăна-такăна хир-уйăн
Таврăннă чух каялла
Ăна туйăнчĕ çĕнĕ уйăх
Хăйĕн çури майлах.

Йынăшрĕ вăл салхуллăн
Тинкерсе çӳлелле,
Уйăхăн урăх çул ун -
Пытанчĕ сăрт хыçнелле.

Вара, илĕртсе тăруçăн
Хăш чухне чулпа пенĕнех,
Юхрĕç-тăкăнчĕç йытă куçĕн
Ылтăн çăлтăрĕсем юр çинех.

*Сергей Есенин*
*Вырăсларан Аристарх Дмитриев куçарнă*

**Сăпка юрри**

...Çăлтăр чĕлтĕр хĕм сапать.
Шăнкăр шыв сиксе чупать.
Пăхрĕ уйăх пӳлĕме,
Хушрĕ тĕлĕк тĕлленме:

«Çиврăр, çиврăр çĕрĕпе,
Вăратать пиччем ирпе.

Ун тумтирӗ ылтӑнран,
Кӗмӗлтен тумтирӗм ман...

Каç пулать -
пиччем çыврать,
Вӑл мана вӑййа ярать.
Пуçлӑп та юмах яма -
Тытӑнӑн ыйхӑлама.
Çӳрӗр тутлӑ тӗлӗкре,
Эп сыхлатӑп халь сире...
Каç пулсассӑн ачасен
Çывӑрмалла мӗн ирччен...»

*Александр Блок*
*Вырӑсларан Геннадий Юмарт* куçарнӑ

**Шкула**

Хӗвел йӑл-йӑл кулчӗ,
Пӑхрӗ кантӑкран.
Ванюка вӑл курчӗ,
Саврӗ кӑмӑлтан.

Тӑхӑнчӗ, тумланчӗ
Ванюк васкаса,
Шкулалла чуптарчӗ
Савӑнса, кулса.

*Анатолий Отачкин*

**Туссем**

Ир-ирех тӑрса тухатпӑр,
Ӑмӑртса шкула чупатпӑр,
Вӗренетпӗр тӑрӑшса,
Пӗтӗм вӑй-хала хурса.

Каярах юлсан пӗри
Пулӑшать ӑна тепри.
Тантӑшпа эпир ялан
Пурӑнатпӑр пит аван.

*Уйӑп Мишши*

**Çамрӑк тусӑмсене**

Ан ӳркенӗр, ӑслӑ пулӑр,
Пӗлмелли питех ну май,
Шырӑр, тупӑр, çырӑр, вулӑр,
Çивӗчленӗр тӗрлӗ май.

Кӗнекесӗр çын вӑл — тӑлӑх,
Туссӑр, пӗлӗшсӗр пекех.
Тӗттӗм çыншӑн пурнӑç - чӑтлӑх,

Çут уçланкă - кĕнеке.

*Петĕр Хусанкай*

**Кĕнеке**

Кĕнеке эп. Эс мана,
Тусăм, чыслă тыткала.
Пурнăçра эп яланах
Çывăх пулăп санпала.

Ан хурат чипер сана
Сăрласа, турткаласа.
Ан чĕрсем страницăна,
Ан пĕтер таткаласа.

Питĕ йывăр аманса
Сăн-сăпат варалансан
Эп выртатăп хурланса:
Тусăм, мĕншĕн ашкăнан?

Эсĕ мана упрасан
Эпĕ саншăн тăрăшам.
Йăлт вĕрентем, йăлт калам,
Ăнлантарам, пулăшам:

Вулас тесен — вулама,
Шутлас тесен — шутлама,
Юрлас тесен — юрлама,
Ташлас тесен — ташлама.

*Юрий Петров*

**Космос паттăрне**

Тӳпере вĕçсе çӳрерĕн
Кăйкăрпа пĕр тан,
Эс чăваш ятне çĕклерĕн,
Паттăр Андриян.

Ялсенчен салам яратпăр,
Шур Шупашкартан,
Юрăра сана мухтатпăр,
Паттăр Андриян!

Çутă уйăхпа калаçрăн
Чĕререн, чунтан.
Çăлтăра та эс пуç тайрăн,
Паттăр Андриян.

*Юрий Сементер*

**Асамат кĕперĕ**

Асамат кĕперĕ —
Тӳпери хăна —
Карăнчĕ чиперрĕн
Çумăр хыççăнах.

Çичĕ ялкăш тĕслĕ
Асамат тĕррин
Атăлта — пĕр вĕçĕ
Çавалра — тепри.
Тĕлĕнеп курсассăн:
Улăпăн лаши
(Ку — пĕкки пулсассăн!)
Мĕнле пулнă-ши?

*Георгий Ирхи*

**Тĕтре**

Карăнайрĕ тĕтре.
Йăсăрланчĕ хуллен,
Шур упа пек çĕре
Анчĕ тăчĕ çӳлтен.

Ерипен, майĕпен
Çăтрĕ вăл çуртсене.
Тĕлĕрен ял çине
Уртрĕ çăмăл кĕпе.

Тĕксĕмленчĕ тĕвне,
Анчах кур-ха, пăхсам:
Хĕвел тухаçĕнче
Тахăш ячĕ кулса!

Сар хĕвел-мĕн тухать —
Хăвалать тĕтрене.
Шăппăн-шăппăн юхать
Шур тĕтре.

Çуртсене
Ирĕке кăларать...
Тӳпе янкăр таса —
Çĕнĕ кунăм сарать
Кăн-кăвак парăса!

*Георгий Ирхи*

**Сывлăм ăçтан тупăнать?**

Ватă Кĕлпукпа ирех
Эпир тухрăмăр хире.

Иксĕмĕр те мучипе
Чĕркуççи таран йĕпе.

Тĕрлĕ тĕлĕнтермĕшсем,
Çуралаççĕ ыйтусем:
— Мĕн-ха çунă çĕрĕпех?
Çĕрĕ мĕншĕн тип-типех?
— Ирхи сывлăм ку, мăнук,
Кунта вăрттăнлăх та сук.
— Сывлăм ăçтан тупăнать?
— Ку, пепкеçĕм, çĕр сывлать.

*Людмила Николаева*

**Суккăр тăмана**

Купит пуçлă тăмана
Кăнтăрлах курмасть мана.
Умĕнчех тăрсассăн та
Кăлармасть пĕр сасă та.
Алтăр куçне чалăртса
Вăл ларать пăхкаласа.
Шăши тухрĕ йăвинчен,
Тăмана — ун хыçĕнчен...
Тĕлĕнсе ыйтап унран:
«Шăши пысăк-им манран?»

*Николай Симунов*

**Шикленчĕк кăмпа**

—Мĕншĕн, мĕншĕн, - ыйтрĕ Петĕр,
Шĕлепкеллĕ-ши кăмпа?
— Çумăртан вăл шикленет-тĕр, —
Тетĕп хирĕç, — çавăнпа.
Ăнкармарĕ пĕчĕк Петя:
— Ак паян, уяр чухне,
Мĕншĕн-ха хывмаççĕ, — тет вăл, —
Кăмпасем шĕлепкине?

*Георгий Ирхи*

**Ĕмĕлке**

Эп утатăп та — утать,
Чарăнатăп — чарăнать,
Кунĕпех çапла паян
Уйрăлмарĕ вăл манран.
Çумăр çитрĕ те таçтан,
Çĕтрĕ ĕмĕлке пачах.
Вăл хăрать-шим çумăртан?

Сунчăка çĕклес часрах.

*Александр Ильин*

**Чĕвĕлпи**

Пăрăва çаран çинчен
Хуса килчĕ Чечекпи.
Пӳрт çамкинчи йăвинчен
Сас парать чĕкеç чĕппи:
— Эпĕ — Чĕвĕл-чĕвĕлпи.
Атя иккĕн туслашар.
— Манăн ятăм Чечекпи, -
Тет хаваслă хĕр ача.
— Тунсăхларăм, Чечекпи.
Пушă вăхăт сан пур-и?
— Пăрăва хупсан, эппин,
Юрлăпăр чĕкеç юрри.

*Николай Ишентей*

**Ĕçчен кĕреçе**

Пĕчĕк тимĕр кĕреçе
Хатĕр яланах ĕçе.
Юр çавать те, хĕл ларать -^
Кĕреçем шур юр хырать.

Çуркунне килсе çитсен
Канăç çук-мĕн кĕреçен:
Шыв юхмашкăн çул уçать,
Пахчана унтан куçать.
Тĕрлĕ йывăç, купăста
Вăл лартма пĕлет ăста.

Пит маттур вăл, пит ĕçчен,
Пурпĕрех хăй çеç пĕччен
Ним те тăваймасть иккен.
Çавăнпа çулла, хĕлле
Эп ялан унпа пĕрле.

*Александр Савельев-Сас*

**Çĕр улми**

Çĕр улми пăрахнă чух-
- Пĕчĕк-ха эс, сан ĕç çук, -
терĕç мана аслисем.

— Юрĕ-çке эппин, ӳсем.
Çитрĕ сарă кĕркунне,

Пахчана чӗнет анне:

— Ме чӗрес, пуҫтар улма,
Пӗчӗк мар пăхса тăма...
Улма ӳснӗ хушăра
Пысăклантăм-ши вара?

*Владимир Харитонов*

**Утăра**

Кур: ҫулаҫҫӗ утă
Пӗтӗм ялӗпе.
Выльăх-чӗрлӗх тутă
Пулӗ хӗлӗпе.

Утăра аппаҫăм —
Ман чăтас епле?
Аттене тутартăм
Пӗчӗк кӗрепле.

Улăхра халь эпӗ
Аппапа пӗрле.
Вал ырлать: «Типтерлӗ
Эсӗ, Кавӗрле».

Ҫич купа эп пухрăм...
Пухăттăм татах:
Ҫӗр ҫырли тӗл пултăм,
Чарчӗ вăл кăштах.

*Александр Савельев-Сас*

Петюк

Тук-тук-тук!
Тук-тук-тук!
Иртенпех шаккать Петюк.
Каскалать те ҫапкалать —
Ҫӗнӗ пӳрт ӳссе ларать.

Тук-тук-тук!
Тук-тук-тук!
Туклатать ҫеҫ мăлатук.
Ӗшенмесӗр ăсталать —
Ҫӗн гараж кунта пулать.

Тук -тук -тук!
Тук-тук-тук!
Тăрмашать каллех Петюк.

Тук -тук -тук!
Пӳрнене
Çатлаттарчĕ мăлатук.
У-у-у!-йĕрет Петюк. —
Ма усал эс,мăлатук?..»
Туклатмасть  халь малатук,
Туклатмашкăн кăмăл çук.

«Эс мана тытма вĕрен,
Кун пек пулмĕ ӳлĕмрен!..»
Тук-тук-тук!
Тук-тук-ту к!
Ĕç пуçлать каллех Петюк.

*Денис Гордеев*

**футбол**

Тапатпăр тĕл — кĕртетпĕр гол, —
Эпир маттур иккен.
Мĕн чухлĕ киленӳ футбол
Кӳрет пире куллен.

Туйса вăя, савса вăййа
Вылятпăр кăмăлтан,
Каймасть пĕртте вăхăт сая
Спортпа тус пулнăран.

*Петĕр Çăлкуç*

**Ракета**

Ӳплештернĕ ик витре,
Айлă-çийлĕ хунă.
Ку — ракета. Пĕкĕрен
Унăн рульне тунă.

Чупкалаççĕ тавралла
Иккĕн-виççĕн харăс:
Кĕç ракета каймалла!
Пурте хăвăрт ларчĕç.

Çĕкленмешкĕн кăшкăрса
Коля ирĕк пачĕ.
Ачасем ав хăраса
Халĕ куç хупаççĕ.

Ӳсчĕр-ха айванскерсем —
Космоса çĕкленĕç
Халĕ куç хупакансем
Ун чухне шикленмĕç.

*Денис Гордеев*

**Сăрт патшилле выляни**

Тухрăмăр тăвайккине
Сăрт патши пулмашкăн.
Терткелетпĕр пĕр-пĕрне
Чи çӳле тăрасшăн

Мăкăль тупрĕ Йăкăнат,
Алли чĕрĕк Ирăн.
Орден евĕр ялтăрать
Кăвакартнă вырăн.

Ман та шăйрăлнă сăмса —
Ыратмасть награда.
Пĕр-пĕрне ыталаса
Виççĕн тан тăратпăр.

*Николай Ишентей*

**Эп çынсен ятне
пĕлетĕп...**

Эп çынсен ятне пĕлетĕп:
Анне тетĕп аннене,
Асанне тесе чĕнетĕп
Утмăлти асаннене.

Темшĕн манăн пукане
Паллаймасть-ха çынсене.
Кам тытсан та аллине
Кăшкăрать пĕрех:
«АН-НЕ!»

*Николай Симунов*

**Кукамайăн миçе чăх?**

Кукамайăн миçе чăх?
Лайăхрах, юлташăм, пăх.
Иккĕш тухрĕç урама
Курăк вăрри пуçтарма.
Хăваларĕ виççĕшне
Хураçка кĕлет аине.
Йăвара ларать пĕри,
Пахчара çӳрет тепри.
Пахчари тем кăтиклет:
«Çимелли-ши тупрăм?» —тет.
Хăй патне пурне чĕнет.
Миçе чăх халь?
Кам пĕлет?

*Анатолий Хум*

**Çумăр**

Тартăм эпĕ çумăртан,
Чупрĕ çумăр хыçăмран.
Çывахрах ав ват юман -
Пур-ха çăланăçăм ман.

Çитрĕ çумăр васкаса,
Аçа-çиçĕм кăларса.
Эх, силлет вăл юмана,
«Тух унтан!» — хистет мана.
Кĕмсĕртетрĕ аслати:
«Эй, итле, этем ачи!
Çиçĕм çиçнĕ вăхăтра
Аякка тăр йывăçран.
Шыв ислетнĕ йывăça
Пултарать çапма аçа».

*Валентина Тарават*

**Светофор**

Сан умра - асфальтлă çул,
Сан умра кĕрлет хула.
Çаванпа эс сыхă пул,
Пахкала умри çула.

Эх, чупаççĕ вар та вар
Машинсем унта-кунта.
Ак виç куçлă светофор
Куç хĕсет сана:

— Тахта!..
— Эй, ан каç çул урлă! — тет
Хĕрлĕ куç. — Инкек çеç тупăн!
— Тимлĕ пул! — тесе хистет
Сарă куçĕ те. — Çул хупă!
Йăл! çиçет те симĕс куç:
— Уттарах! — тет.
— Тавтапуç!

*Николай Теветкел*

**Автан**

— Кунсерен ӳссе пыратăп,
Эп кайран кам пек пулатăн? -
Ыйтрĕ чĕпĕ автанран.
— Эс-и? —

Тет ӑна автан. —
Ман пекех, паллах, пулан:
Кӑкӑр урлӑ шӳлкемеллӗ,
Çырла тӗслӗ тӳпеттейлӗ,
Кӑлтӑрмач пек шур хӳрелле,
Çӗр чавма —
Çинçе чӗрнеллӗ...
Ӳс-ха эс, Петюк!
Кӑт-кӑт-кӑт!
Кук-ку-ру-кук!

*Николай Карай*

**Ленӑпа Кампур**

— Çакӑ пӳртӗн хуçи кам?
Ыйтрӗ Лена Кампуртан.
Йытӑ вӗрчӗ:
— Хам-хам-хам!
Манӑн пӳрт ку,
Хуçи хам.
Хам-хам-хам!
*Александр Ильин*

**Кушакпа шӑши**

Ыратать пӗрмай шӑм-шак
Шӑшие хӑваласах,
Мӑртӑхать хура кушак. —
Çут тӗнчере ма пур-ши
Йӑрӑ та чее шӑши?
Шӑши тус пулмасанах
Тӑранӑттӑм хӑймапах.

*Петӗр Çӑлкуç*

**Ӗне**

Урамра ӗне тӑрать,
Чарӑнмасӑр муклатать:
— Мук! Мук! Му-у-ук!
Алӑк уç, Куçук!
Илсе килтӗм сан валли
Ашӑ сӗт витре тулли.

*Александр Ильин*

**Кушак çури**

Кушак çури
Шӑши патне
Çыру çырать.

Çырать-çырать те
Çырнине саспах вулать:
«Çĕклетĕн манăн кăмăла
Пĕр эс кăна.
Хĕвел ансассăн
Канмалла кил хăнана.
Сана эп куртăм тĕлĕкре
Ĕнер ирпе,
Çӳретĕн пек çак кĕлетре
Сар кĕпепе...»
Кушак çури татах çырать,
Татах вулать.
Лар айĕнче шăши ларать —
Кулса ярать.

*Николай Карай*

**Çуркунне ăçта-ши?**

Урама тухсан анне
Килчĕ терĕ çуркунне.
Савăнса тăратăп —
Таврана сăнатăп.

Тӳпере хĕвел хĕртет —
Пĕтĕм халăх хĕпĕртет.
Шăнкăр-шăнкăр çырмисен
Шăнкăрав пек сассисем.

Тăрлатаççĕ тăрисем,
Сиккелеççĕ путексем,
Шăнкăрчи те йăвара...
Çуркунни ăçта вара?

*Николай Симунов*

**Хĕвеле ятлатăп**

Кĕнĕрен ман хĕвелле
Эп ятлатăп хĕвеле:
— Çу çитсен хĕрте-хĕрте
Иртĕхетĕн уй-хирте.
Хăпаратăн тӳпене —
Хывтаратăн кĕпене.
Тăрăшатăн уссăрах:
Çулла пăчă сансăрах!
Ма хĕлле мĕнпур çĕрте
Çакăн пек хĕрте-хĕрте
Хывтармастăн кĕрĕке?

*Николай Симунов*

**Кĕркунне**

Шаннă, ĕнтĕркенĕ
Çамрăк улмуççи.
Сарă тум пĕркеннĕ
Çирĕк йывăççи.
Авăнать йĕлме тек,
Çулçисем чĕтреç.
Кивелми тумли те
Ешĕл чăрăш çеç.

*Владимир Харитонов*

**Сывă-и, сентябрь?!**

Сывă-и, сентябрь?!
Ирт-ха малалла.
Кур: эпир чупатпăр
Ир-ирех шкула!

Кăмăлу сан ырă,
Çупăрлан çемсен.
Пирĕнпе, тен, пырăн
Юлмăн пирĕнтен?

Йăлкăшать сентябрь,
Йăлкăшать, кулать:
— Ĕçĕм ман çĕр те пĕр
Тăрăшас пулать.

Çĕр улми пусси те
Ав кĕтет мана.
Садсене те çитĕп,
Кĕрĕп пахчана.

Юрĕ-çке, атьсемĕр,
Чупăр шкула май.
Ĕçĕм ман çĕр те пĕр,
Сирĕн те нумай.

*Юрий Айташ*

**Тавтапуç сана, учитель**

Тăрăшса ăс-тăн паратăн
Кунсерен,
Кашнине ыр пурнăç çулĕ
Парнелен.

Çавăнпа кун-çул илемлĕ,
Çавăнпа эпир телейлĕ, —

Тавтапуç сана, учитель,
Чĕререн.

Ăшă кăмăллă, сăпайлă
Пулнăран
Эс атте-анне пек çывăх
Туйăнан.

Эс ĕçре хастар пулмашкăн
Вăй кĕртен,
Çĕршыва чунтан савма та
Вĕрентен.

Çавăнпа кун-çул илемлĕ,
Çавăнпа эпир телейлĕ, —
Манас çук сана, учитель,
Нихăçан.

*Геннадий Юмарт*

**Кĕр парни**

Çитрĕ, çитрĕ ылтăн кĕр —
Тарават та пуян хор.
Уçрĕ эреш арчине,
Парнелерĕ пурлăхне:
Хăмăр кĕпе — юмана,
Хĕрлĕ шăрçа — палана,
Çыхрĕç сарă тутăрсем
Пике евĕр хурăнсем.
Упа валли — пыл катки,
Чĕрĕп валли — уплюнкки.
Тулли măйăр — пакшана...
Тав тума ан ман кăна!

*Людмила Николаева*

**Шанса пачĕ руль атте**

Тахçанах ман ĕмĕт пурччĕ:
Эх, шофĕр пуласчĕ те!..
Хале акă пурте курччăр:
Шанса пачĕ руль атте.
Савăнса ăна тытатăп,
Çĕкленсе тапать чĕре.
Ларăр — эп илсе каятăп
Çитмелли çĕре сире.

Çил хашка-хашка хăвалĕ —
Пурпĕр юлĕ хыçала.
Сахалрах-тăр çав хавалĕ
Шăхăрсан та хуçалла.

— Ну, мĕнле? — ыйтать аттеçĕм, —
Ятăн-и чунна уçса?
— Питĕ шеп! Машина — çиçĕм! —
Хуравлатăп йăл кулса.

*Аркадий Казанов*

**Анне алли**

Амăшне больницăна
Асатни эрне кăна.
Кил хуçийĕ халь Тимук:
Выляма ун вăхăт сук.
Ĕнине те сумалла,
Сурăхне шырамалла,
Чăх-чĕпне те памалла,
Пахчана шăвармалла...
Çухăрать сысна çури:
Выçăпа-ши е юри?
Лаçăра та йĕрке çук:
Кӳлленсе выртать тип çу.
Таса мар савăт-сапа
Сахалтан та пĕр купа!
Ĕшенсе хиртен киле
Ашшĕ сĕм çĕрле килет.
Апатне пĕçермелле,
Ашшĕне çитермелле.
Уйăх иртрĕ çаплипех,
Кĕрмешсе те тĕрмешсех.
Амăш килчĕ сывалса,
Тимук ячĕ сывласа.
Халь пӳртре те çутăрах,
Сарнă вырăн — ăшăрах.
Ытарми анне алли —
Çавă тăнăçлăх палли.

*Чакак Ваççи*

**Çутă ĕмĕт**

Чунăм ман хавхалануллă:
Чĕр чунсен салонĕнче
Пурăнать-ха ылтăн пулă
Хăйĕн шыв хваттерĕнче.

Виçĕ ĕмĕт ĕмĕтлентĕм
Пурнăçа кĕртес килет,
Аннене çавна систертĕм,
Ылтăн пулă та пĕлет.

Ман пĕрремĕш ĕмĕт: пултăр

Ялапах анне хавас.
Теттесемпеле пӳрт тултăр
Саванса выляс-кулас.

Эп ракетăпа вĕçесшĕн
Виççĕмĕш тĕллев çапла.
Çутă тӳпене çитесшĕн
Çĕнĕ çăлтăр уçмалла.

Хуравне вара пĕлетĕп:
— Çапла пултăрччĕ, юрать,
Аçуна та, аннӳне те
Лайăхрах итлес пулать.

*Светлана Гордеева*
*Валерий Кошкин куçарнă*

**Вăхăт ăçта?**

Аппана чĕнетĕп выляма,
Пиччене кĕтетĕп вулама.
«Вăхăт çуккă!» — теççĕ те мана
Васкаса чупаççĕ вăрмана.

Çук аттен те вăхăчĕ нихçан
Хăпаймасть вăл телевизортан.
Лавккана чупать анне ялан:
«Ху тĕллĕн вĕрен,     тет, — ан кулян!»

Вăхăта эп кунĕ-кунĕпе
Ирттеретĕп хам пуканепе.
Хăш чухне ыйтатăп: «Пукане,
Ма пурте çухатнă вăхăтне?

Илме çук-ши лавккаран ăна,
Килмĕ-ши чĕнсессĕн хăнана
Юрăсем юрласчĕ аннепе
Сăвăсем вуласчĕ аттепе...»

*Николай Симунов*

**Пирĕн качака**

Йĕтĕн пек çемçе сухалĕ,
Шăкăрт-шăкăрт çут пушмак.
Тăлăп пек ула чаппанĕ,
Икĕ шĕвĕрлĕ калпак.

Кур, сарай çине хăпарнă
Ту кушакĕ пек вăр-вар.
Купăста пуçне тустарнă
Пахчана кĕрсе чал-пар...

Ак мĕнле вăл «пултарулллă»
Пирĕн йăрă качака.
Ялт! çеç сикрĕ вĕрлĕк урлă,
Эп ятлатăп пуçтаха.

*Валем Ахун*

**Хур аçи**

Шурă-хура хур аçи,
Йышлă çемйин хуралçи,
Шав хăрах ури çинче
Вал тăрать картишĕнче.

—Хур аçи, хăрах уран,
Тен, аманнипе тăран?
Еплерех сана сиплес?
Тухтăра, тен, чĕнтерес?

— Ка-ка-как! — сас пачĕ хур,
Сып-сывах эп, акă кур:
Ик ури те манăн пур,
Пултарап утма маттур!

Санăн ыйтăвна вара
Хуравлатăп çапларах:
Çĕре йывăр пуласран
Эп тăрап хăрах уран.

*Петĕр Çăлкуç*

**Курак**

Чăваш ялĕнчи курак
Вырăсла ыйтать:
— Как? Как? —
Ларнă та йăмра çине
Каçăртать хăй сăмсине.
Чăвашла ыйтсан кăна
Хурав парăп эп ăна.

*Николай Симунов*

**Кăткă**

Кунĕпех хыпаланать,
Тем йăтать,васкать, шырать,
Савалать, шаккать, туптать —
Çурт-йĕрне хăй çавăрать.

Кăткă çивĕч те ĕçчен,
Кăткă ĕçлĕччĕ темччен.

Анчах кӗҫех каҫ пулать,
Катка тус та ывӑнать.

*Людмила Николаева*

**Тӗлӗнтермӗш тигр**

Тайгара пурнать,
Ак мӗнле вӑл, итлӗр,
Юрӑ янрататать:
«Эпӗ тигр, хӑрлаккай,
Эп юрлатӑп хама май,
Никамран та хӑр-рамастӑп
Хӑр-раманшӑн хур-рланмастӑп.
Хар-хар-хӑр!
Тӑр-тӑр-тӑр!»

*Николай Ыдарай*

**Хӗлле**

Лапка-лапка юр ҫӑвать,
Хура ҫӗре шуратать.
Хура ҫӗре шуратать,
Мамӑк сарнӑн туйӑнать.

Вӑштӑр-вӑштӑр ҫил вӗрет,
Пите сивӗ чӗпӗтет.
Пите сивӗ чӗпӗтет,
Хӗл ҫитнине пӗлтерет.
Ача-пӑча ярӑнать,
Тӑвайккине якатать.
Тӑвайккине якатать,
Хӗл кунӗпе савӑнать.

*Василий Давыдов-Анатри*

**Хӗллехи ир**

Урамра халь ҫатӑр сивӗ,
Тухсанах пите тӑм илӗ.
Хурӑн шурӑ шупӑрпа,
Шур ҫӳҫеллӗ тутӑрпа.

Таврари шап-шурӑ мамӑк
Сивӗпе курнать кӑваккӑн.
Йывӑҫсем ҫинче хрусталь,
Хускатса ан так ахаль.

Хӗллехи хӗвеллӗ ирӗн
Ытарми черчен кӗввийӗ

Пĕр сас-чӳсĕр янăрать,
Кăмăла уçса ярать.

*Лев Кадкин*
*Галина Матвеева куçарнă*

**Çĕнĕ юр**

Хĕл Мучийĕ килсе çитрĕ
Инçетрен, Пăр çĕрĕнчен.
Таврана юрпа вăл витрĕ
Таврана кĕр сисиччен.

Шура çĕлĕк тăхăнтарнăн
Курăнаççĕ юпасем.
Эрешленнĕ, капăрланнă
Таврари пур йывăçсем.

Çăм алсишĕ парнеленĕ
Хĕл Мучи туратсене.
Кĕмĕлпе йăлт чĕнтĕрленĕ
Чӳрече каррисене.

*Раиса Сарпи*

**Ытарайми хĕл**

Хĕл илемĕ, хĕл илемĕ!
Кам кăна унпа киленмĕ,
Йывăçсем — пирĕштисем пек,
Ачасем — асамçăсем пек.
Ытарми çак вăхăта
Кам юратмĕ тупата.
Чи пахи — Çĕн çул уявĕ,
Хĕл Мучин манми сăйлавĕ.
Янкăс, хӳхĕм юрăсем,
Парнесем, кучченеçсем.

*Петĕр Çăлкуç*

**Хĕл Мучие — вĕри мунча**

Шур сухаллă Хĕл Мучи,
Асаттен çăка мунчи
Çăвăнма чĕнет сана:
Çу, тасат шур сухална!
Тăлăпна хывса парах,
Ăшшине пар вăйлărах.
Хăпарса лапка çине

Вут кăлар çине-çине!
Ан хĕрхен эс милĕкне
Сиплĕ пулĕ пилĕкне.
Сунас лекнĕ пуль сана,
Эмелле-ха сăмсуна.
Мунчара тарла вăрах
Нимĕнрен те ан хăра.
Пуçласассăн ывăнма
Пăлтăра тух çăвăнма.
Хырса яр шур сухална,
Тĕреклет вăйна-хална.
Хăпарса лапка çине
Тепĕр хут пар ăшшине.
Ывăт шур çăматтуна,
Тăхăн сăран аттуна.
Тăпăр-тăпăр! тутарса,
Пĕр тăрса та пĕр ларса
Ёлкăра хавас сăнпа
Кайран ташлăпăр санпа!

*Николай Симунов*

**Марине**

Пĕчĕк йăмăк Марине
Вĕрентет тĕр тĕрлеме.
Ак илет те çиппине
Тытăнать вăл ĕçлеме.

Хĕрелет хăй, тарăхать:
— Ман, анне, хитре пулмасть,
Аллине йĕппе тирет,
Уласах вара йĕрет.

— Ан йĕрсемччĕ, Марине,
Çăмăл мар вал — ĕç тени.
Малтан вĕрен йĕркине,
Кайран тĕрлĕн хитрине.

*Людмила Сорокина*

Путене

Сар хĕвел хĕртсе пăхать.
Пăчăр-пăчăр тар тухать.
Ай-ай-ай, мĕн каласси,
Йывăр кăшман çумласси.

Ана вĕçĕ курăнмасть,
Пач пĕтессĕн туйăнмасть.
Амăшĕ чеен кулать,
Ывăлне çапла калать:

— Шет, сисмерĕ вăл хăй те,
Пĕтрĕ те иккен йăран.
— Ыльăм, хальччен чăтнине
Тухарах ана вĕçне.
Путене унта ларать,
Тăрăшсан çеç тыттарать.
— Анне, мĕншĕн путене
Пытанать-ха хир вĕçне?
— Тухсан курăпăр унта,
Тытсах пăхăн аллунта.
Юлашки вăйне пухса
Так! та так! таккать Куçук.
Шăрăхĕ пырать пуссах —
Путенийĕ çук та сук.
— Анне, култăн эс манран,
Путене пулман хирте!
Амăш Çаплах юптарать,
Кирлĕ йĕрпех чуптарать:
— Кĕтсе ывăннă пулас.
Кайнă. Мĕншĕн айăплас?
Вăл пи-ит пулăшрĕ пире
Çумлама паян хире.

*Чакак Ваççи*

**Кĕреçе**

Пĕчĕкçеççĕ кĕреçе
Юратмасть нимле ĕçе.
Эп тытмасăр ĕçлемест -
Нимĕн те тума пĕлмест.
Пахчана йăтса тухатăп:
Йăран чавтăр ыриччен.
Сывлăш çавăрма памастăп —
Тăрăшатпăр тарличчен.
Юратать иккен ĕçе
Манăн пĕчĕк кĕреçе!
Шав чаватпăр! Шав чаватпăр!
Ывăнсан — выртса канатпăр.

*Николай Симунов*

Ака уйăхĕ

Сиплĕ уйăх, чĕрĕ уйăх,
Кĕтрĕмĕр сана, апрель.
Эсĕ — шăнкăр шывлă улăх,
Эсĕ — йăлтăркка хĕвел.

— Ытарайми çанталăк,
Çурăлса тухас папка...
Çӳл тӳпе — кăвак шăналăк —

Вĕçсĕр-хĕрсĕр сарлака.

Пăсланса çĕр типнĕçемĕн
Ял тухать уя-хире,
Çĕнĕ юрă, çĕнĕ çемĕ
Янраса тăрать ĕçре.

Симĕс уйăх, чĕрĕ уйăх,
Ырă уйăх эс, апрель.
Мĕн тери илем те пурлăх
Парнелетĕн эс пире.

*Юрий Сементер*

**Ула такка**

Çуркуннехи вăрманăн
Чăпар уçланкинче
Илтейрĕм эп такканă
Сасса пуç тĕлĕнче...

Ăçта-ши? Чимĕр, тăхтăр!
Хыр тăрринче, ара,
Вăрăм сăмсаллă «тухтăр» —
Ула такка ларать!

— Ула таккаçăм, тусăм,
Кўрсемччĕ, — терĕм, — усă:
Пырсамччĕ пахчана,
Сиплеччĕ хурăна.

— Пымастăп, — терĕ кайăк
Пылак шывне ĕçме
Пĕлетĕн эс... халь кай та
Вĕрен-ха сиплеме!

*Георгий Ирхи*

**Тĕтре**

Уçланкă ыйхăран вăранчĕ,
Тĕтре упаленме пуçлать.
«Хĕвел тухман пулсан аванччĕ», -
Тесе хăйпе хăй калаçать.
Анчах хĕвел канса выртать-и?
Паян та тăчĕ ир-ирех.
Тĕтре ват çын пек хаш! сывлать те
Куçран çĕтет, вăл çук текех.

*Александр Ильин*

**Улăхра**

Улӑхра ҫулаҫҫӗ утӑ,
Ӗҫ сасси — каҫчен!
— Выльӑх-чӗрлӗх пултӑр тутӑ, —
Тет кашни ӗҫчен.
Кӑкӑр ҫӳллӗ ӳснӗ курӑк
Кӑмӑла ҫӗклет.
Таврара янравлӑ юрӑ
Кайӑк пек вӗҫет.
Ҫулнӑ та ӑна — пухатпӑр
Кӗреплепеле,
Ҫӳллӗ купасем лартатпӑр
Ҫул хӗрринелле...

*Александр Ильин*

**Ҫумӑр**

Иртрӗ сулхӑн ҫил вӗрсе,
Ҫиҫӗм йӑлтӑртатрӗ,
Сывлӑша йӑр-яр чӗрсе
Пӗлӗте вӑратрӗ.

Чупрӗ пӗлӗт ҫилленсе,
Аслати кӗрлерӗ.
Ав хӗвел тӗрлет ҫиҫсе
Асамат кӗперӗ.

Ашӑ ҫумӑр савӑнса
Кунӗпе ташларӗ.
Йывӑҫ-курӑк ҫӑвӑнса
Ирӗклӗн сывларӗ.

Юлчӗ чунӑм уҫӑлса,
Таврара пит ырӑ.
Куҫӑмран пӑхать кулса
Анса ӳснӗ тырӑ.

*Александр Каттай*

**Шупашкар фонтане**

Хат! та хат! сывлать Ленук
Тинкерсе залив енне:
— Ӗнер пурччӗ, паян сук...
Эх, ӑҫта фонтан, анне?

Еплерех ҫӳл тӳпене
Сирпӗтетчӗ вӑл шывне.
Халӗ ваннӑ пулмалла,
Хӑвӑртрах юсамалла.
Амӑшӗ йӑл-йӑл кулать,

Ачине пуҫран шăлать.
— Ахалех эс кулянан,
Пĕртте ҫĕмрĕлмен фонтан.

Вал ĕҫленĕ кунĕпе:
Ав епле таса тӳпе,
Сывлăш уҫă та таса —
Тăранаймăн сывласа.

Питĕ ывăннă фонтан,
Халь канать вăл — хăв куран.
Вăрансассăн ирхине
Каллех пуҫлĕ хăй ĕҫне.

*Олег Ялтра*

**Атьăр похода!**

Иртерех вăрат-ха,
Анне, ыйхăран.
Похода тухатпăр
Ушкăнпа ыран.

Ăс пухма ҫӳренĕ
Хĕл каҫа шкула.
Глобуса йĕрленĕ,
Тупнă сăрт, хула.

Пал! тапать ҫăлкуҫĕ,
Чĕрĕлет вăрман...
Пирĕн юрă уҫҫăн
Юхĕ ян! та ян!

Ту тăрне хăпарăп,
Хăнăхăп анма.
Эп палатка карăп
Хӳтлĕхре канма.

Кĕрĕпĕр шыва та,
Ишĕпĕр чăмса.
Кĕмĕл хумлă Атăл
Тăрĕ хумханса.

Иртерех вăрат-ха,
Анне, ыйхăран.
Похода тухатпăр
Ушкăнпа ыран.

*Владимир Харитонов*

**Асамат кĕперĕ**

Аслати тин çеç кӗрлерӗ,
Çурӗ çумӑр çаптарса,
Халь вара сӗрен кӗперӗ
Юлчӗ тӳпере тӑрса.
Вӑл чап-чакӑр хӑюсемлӗ,
Тӗрлӗрен тӗсрен вӗсем,
Чӑннипех те пит илемлӗ
Çак кӗпер халь, ачасем!
Кам-ши хӑвӑрт ӑсталарӗ
Кӗпере пӗр самантрах?
Улӑхса, тен, пӑхар мар-и
Тупсӑмне пӗлме часрах?

*Александр Ильин*

**Тӗрлӗ тӗс тӗнче тулли**

Тӗрлӗ-тӗрлӗ тӗспеле
Çут çанталӑк витӗнет.
Шур мулкач шур кӗрӗкпе
Шур юр çийӗн вирхӗнет.
Сахӑр шурӑ çеç пулать,
Шывра тӗссӗр çухалать.
Сарӑ хӗвел йӑл кулать,
Сарӑ саламне ярать.
Тырӑ-пулӑ кӗр енне
Саралать хӗвел пекех.
Хӗвел çаврӑнӑш пике
Сарӑ тутӑр пӗркенет.
Хӗрлӗ куçлӑ светофор
Чарӑнма пире хушать,
Хӗрлӗ сӑнлӑ помидор
Питӗ юратать ӑшша.
Кӑвак тинӗс куç висçми
Сарӑлса выртать умра.
Кӑвак кит ишет шывра,
Шыв сыпать вӑл çӑвара,
Пӗрӗхтерсе кӑларать,
Çӑварта тем хӑварать.
Симӗс-симӗс улӑхра
Симӗс курӑк чашкӑрать.
Тӗрлӗ тӗс тӗнче тулли:
Кӗмӗл пек пӗве пулли,
Чечексем епле хитре,
Сӗт пекех ирхи тӗтре.
Тӗссӗр, тӗксӗм тӗнчере
Кичем пулӗччӗ пире!

*Любовь Афлятунова*
*Виталий Енӗш куçарнӑ*

**Хӗвел пике**

Хĕрлĕ тухăç хĕмĕнчен,
Шурăмпуç кăварĕнчен
Тухрĕ кăмăллă сар хĕр,
Кĕтсе илчĕ тулăх çĕр.
Йăл кулать те çĕр çине
Тӳперен шевли ӳкет.
Ешĕл тумлă ялсене
Ăшшине вăл парнелет.
Каç пуçтарнă хĕлхемне
Салатать «хĕр» ирхине.
Тӳперен хĕвел анать
Çут тĕнче ыйха путать.

*Клавдия Вишневская*

**Уйăх**

Уйăх чăкăт пек çавра,
Чăкăт пек вăл шап-шурах.
«Чăкăт пек вăл тутлă пуль?»
Шухăшлать пĕчĕк Микуль.
Ир пулать те каç пулать,
Уйăх катăлсах пырать.
«Кам çиет-ши уйăха?» —
Тĕленсе тăрать Микуль.
«Чăланта шăши пурнать,
Каçсерен вăл çывăрмасть.
Çав кăшлать пуль уйăха», —
Тавçăрса илет Микуль.

*Петĕр Эйзин*

**Çывăр, уйăх**

Сăпкари ача пек уйăх
Выртнă, лăпкăн тĕлĕрет.
Куç пăван асамлă тунсăх
Çак сăнпа, тен, пĕр килет?
Уйăх, тен, ĕçленĕ эсĕ
Кăнтăрла хастарланса,
Çавăнпа халь ним сисмесĕр
Çывăратăн мăшлатса?
Эсĕ каннине чухланăн
Шăплăх килнĕ шăвăнса.
Çак асамлăха чунтан эп
Тинкеретĕп савăнса.

*Петĕр Çăлкуç*

**Каппайчăк Çилпе**
**ырă Хĕвел**

Каппаять хăватлă Çил:
— Эп çӳлтен илетĕп пил.
Ак вылятăп, ак юрлатăп,
Пĕр вĕçетĕп, пĕр анатăп,
Пӳрт тăрри çинче ташлатăп.
Курса тăр - ак хăпаратăп
Çӳллĕрен çӳле. Хăвалăп,
Çут Хĕвел, сана кунтан.
Тĕксĕм пĕлĕтсем яратăп.
Хăвату черченкĕ сан.
Йăл та йăл кулать хĕвел:
Эх, каппайчăк. Питĕ шел,
Çук санра сăпайлăх, тимлĕх.
Илеймен çӳлтен эс пиллĕх.
Чĕнмен чух ялан килетĕн,
Ашкăнатăн, çĕмĕретĕн...
Çĕр çинче те шыв çинче
Эс киревсĕр пуринчен.
Кай-ха, пăрăн çул çинчен.
Култăр савăнса тĕнче.

*Валентина Тарават*

**Пĕрремĕш юр**

Юр çĕр каçипех вĕçтерчĕ
Мамăк евĕр ярăнса,
Хĕл çитни çинчен систерчĕ
Парăс евĕр хупласа.
Ир-ирех кушак вăранчĕ,
Пăхрĕ те чӳречерен
Карăнса тăма вăтанчĕ
Тĕлĕнсе чун-чĕререн.
Кам капла тума пултарнă?
Тĕлĕнтермĕш!
Ах тĕнче!
Тахăшĕ такса тултарнă
Шур хăйма кил картинче.
Чĕлхине кушак çуларĕ,
Чупса тухрĕ урама,
Сăмсине юр кăтăкларĕ —
Ĕмĕт кайрĕ харама.
Силленсе çилленнĕн пулчĕ:
Тутлă мар-мĕн, ай тур-тур!
Кӳршĕсен кушакĕ кулчĕ:
— Хăйма мар çав ку, шур юр.

*Светлана Гордеева*
*Валерий Кошкин куçарнă*

**Ытарма çук хитре**

Сар хӗвел йӑл кулать тӳпере.
Шевлипе ҫупӑрлать вӑл пире
Сивӗ хӗл иртнине систерсе,
Ҫуркунне ҫитнине пӗлтерсе.
Шурӑ юр ирӗлет васкаса.
Ытарма сук хитре вӑл, таса.
Туй тӑваҫҫӗ хӗрсех тумламсем
Ҫурт тӑрри хӗррипе ӳкнӗҫем.
Кӑнтӑртан таврӑнаҫҫӗ вӗҫсе
Кураксем, шӑнкӑрчсем, чӗкеҫсем...
Кӑвак пӗлӗт мӗнпур талккӑшпе
Тӗрӗленнӗ чӑваш тӗррипе.

*Михаил Мерчен*

**Ҫулла**

Ҫӗнелсе капӑрланчӗ тӗнче,
Улӑхра ҫӗр пин тӗслӗ чечек.
Лӗпӗшсем вӑй выляҫҫӗ унта,
Лӗп ҫилпе чӳхенеҫҫӗ каҫчен.
Ах, тӑхтар-ха тухмашкӑн утта!

*Александр Пӑртта*

**Аслатиллӗ ҫумӑр**

Янкӑр тӑрӑ тӳпере
Ҫула тухнӑ пӗлӗтсем,
Шурӑ пулнӑран пире
Мамӑк пек курнаҫ вӗсем.
Ҫиҫрӗ ҫиҫӗм йӑр та яр!
Хуп-хура пӗлӗтсене
Хӑваларӗ (ах, хаяр!)
Ҫавра ҫил вӑрман енне.
Вирхӗнчӗҫ килӗсене
Урамри шӗвӗрккесем.
Ан йӗпентӗр — кӗпене
Тытрӑм эп те чӗркесе.
Аслати кӗрленипе
Ҫурӗ ҫумӑр, ҫавӑнтах
Карӑнчӗ... темле кӗпер —
Ҫичӗ тӗслӗ ҫут ахах.
Тухрӗ пӗлӗт хыҫӗнчен
Сар хӗвел йӑл-йӑл кулса.
Курӑнать чӳречерен:
Ҫӳл тӳпе каллех таса.
Тухрӑм эпӗ — чун хавас! —
Кӳлӗ пулнӑ урама,
Ҫумӑр шывӗпе ҫӑвас
Питӗме те аллӑма...

*Вăрăм Палюк*

**Вăрттăнлăх**

Куккăш килнĕ хăнана
Пĕчĕк Петĕрсем патне.
Юратать вăл ачана,
Чуптăвать сантал питне.
— Пысăкланнă шăллăм ман
Салтакран эп киличчен! —
Ачана мачча таран
Çĕклесе тăрать темччен. —
Илеес çук палласа, —
Чарăнмасть салтак çаплах, —
Кăтартсамччĕ каласа
Епле ӳсрĕн-ха каплах?
-Пулăп халĕ санпа тан, —
Тавăрать ача кулса,
Пĕлтерем сана чунтан:
Пур ман вăрттăнлăх, кукка.
Çăм арлать те кукамай,
Тепĕр чух йĕки ӳкет.
Эп илсе парсан пĕрмай:
«Пысăк пул, мăнукăм», -  тет.
Час-часах атте килте
Карта-хура тӳрлетет.
Эп пăта парсан илсе:
«Пысăк ӳс эс, Петĕр»,  -  тет.
Е аппа сĕрет урай
Пулăшап ăна пĕрмай,
Çакăншăн вăл хĕпĕртет:
«Пысăк ӳс эс, Петĕр»,  - тет.

Пĕлтĕм, - терĕ куккăш, - халь
Эс ларман иккен ахаль,
Çӳремен ĕсĕклесе,
Пысăкланнă ĕçлесе.

*Александр Савельев-Сас*

**Пирĕн телей**

Пĕррехинче аннерен,
Те халиччен илтменрен:
«Телей тени — мĕн тени?»
Тесе ыйтать Сăпани.
Анне ăна йĕркерен,
Мĕнпур чунтан-чĕререн
Çурăмĕнчен лăпкаса
Ăнлантарчĕ каласа:
«Эсĕ паттăр çитĕнни,

Ача садне çӳрени,
Унта вăйă выляни —
Телей çавă, Сăпани.
Мăн заводсем шавлани,
Хирте тыр-пул кашлани,
Эпир лайăх пурăнни —
Телей çавă, Сăпани.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхни,
Спутник вĕçсе çĕкленни,
Çĕршыв ӳсни, сарăлни —
Телей çавă, Сăпани.
Эпир сана юратни,
Пире эсĕ итлени,
Маттур, лайăх вĕренни —
Телей çавă, Сăпани...»

*Василий Давыдов-Анатри*

**Ĕмĕт**

Кӳршĕре, ик-виç кил урлă:
Юра тантăшăм пурнать.
Питĕ чăрсăр та хăюллă
Ĕмĕтпе çунатланать.

Вăрттăн халĕ систересшĕн
Унăн ĕмĕтне сире:
Çитĕнсессĕн çул çӳресшĕн
Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсре.

Çавăнпа халех шутлать вăл
Парăслă карап тума,
Ăнтăлать куллен шкулта та
Пуринчен малта пыма.

Юра хăй вăл питĕ шухă:
— Пулăпах, — тет, — капитан
Килĕшетĕп: лайăх шухăш,
Ĕмĕт çитĕ тăрăшсан.

Хам пирки кăштах калас-и?
Штурманах пулас пуль теп.
Карапа çултан пăрмасăр
Тĕрĕс илсе пырăп эп.

Юлташпа таçти çĕре те
Ĕмĕт пур çитсе килме.
Чĕнĕпĕр, туссем, сире те
Пирĕнпе çул çӳреме.

*Петĕр Çăлкуç*

**Кивĕ пушмак**

«Пушмаку апат çиесшĕн,
Асăрхарĕ асатте. — Кĕт, çитерĕп». —
Çĕнетсессĕн
Пулĕ вăл каллех «тетте».
Кăшт кăна хăть пулăшмашкăн
Хатĕрлентĕм ваттине —
Пушмака тăрантарасшăн
Хĕрхенмерĕм пăттине.
Асатте пӳрте кĕрсессĕн
Кулса ячĕ сасăпах:
«Пушмака юсас тесессĕн
Çĕнетес урăхларах.
Çăварне те карнă вирлĕ,
Чылай чалăшнă кĕлли.
Пăтă мар, пăта çеç кирлĕ
Юсав ĕçĕсем валли».

*Светлана Гордеева*
*Валерий Кошкин куçарнă*

**Ляпук**

Ляпук пушмак тăхăннă —
Пĕри шăши çурин пек,
Тепри пăши урин пек.
Утса пырать урампа
Хăрахшарăн пушмакпа.

Сылтăм ури шак-шак-шак!
Сулахайĕ лак-лак-лак!
Пĕр пушмакĕ Урпашра,
Тепĕрийĕ — Муркашра.

Çынсем лăх-лăх кулаççĕ,
Варĕсене тытаççĕ.
Пирĕн Ляпук шав утать,
Пушмакĕшĕн савăнать.

*Анатолий Тимофеев-Ыхра*

**Амăрту — вăй-хал уççи**

Çу. Ир кӳлĕм. Укăлча.
Шăкăрин тăрать ача.
Пурте сывлăхлă, хастар.
Йыхравлать хаваслă старт.

Ăмăрту — вăй-хал уççи.
Шăхărать шăхличĕ — ши!
Чăтăмлин çĕнтермелле,

Финиша ёлкĕрмелле.

Ух! Ах! Чупăр хăвăртрах!
Тупăшар хастаррăнрах.
Кам малта? Кам чемпион?
Кĕр! кĕрлерĕ стадион.

*Николай Ишентей*

**Кушак çурипе шăшисем**

Кантăк янаххи çинче
Çывăрать кушак çури.
Мăр-мăра çурăмĕнчен
Ачашлать хĕвел ури.
Аялта, урайĕнче,
Туй тăваççĕ шăшисем.
Кушак тус турилккинчен
Тутанаççĕ сĕт вĕсем.
Ак мăр-мăр кĕçех вăранчĕ,
Тăчĕ вăл ура çине.
Шăшисем тарса пытанчĕç,
Вăрттăн чăмрĕç сакайне.
Тимлесех вĕсем сăнарĕç
Пĕчĕк-пĕчĕк хушăкран,
Пĕр-пĕрне вара каларĕç:
— Асăрханăр кушакран.

*Андрей Растворцев*
*Юрий Сементер куçарнă*

**Ӳстĕр хурăн хӳтĕре**

Çамрăк хурăн çырмара
Шăнса кайнă, тăр-р! чĕтрет.
— Эп шывра тăра-тăра
Чирлеме пултарăп, — тет.
— Каласам, епле кунта
Лекрĕн чăнкă çырантан?
— Çурхи çумăр çĕр хута
Çурĕ, çурĕ те, кайран
Ире хирĕç çырмана
Куçса анчĕ-çке çыран.
Мĕн кĕтет-ши халь мана,
Кам хăтарĕ шыв-шуртан?
«Йывăça пулăшмалла», —
Шухăшларăм та кĕçех
Илтĕм хăвăрттăн алла
Çивĕч вĕçлĕ кĕреçе.
Инкекри çак хурăна
Лартрăм куçарса тӳрех
Çĕнĕ типĕ вырăна.

Хӳтлӗх тупрӗ вӑл тинех.
Ушкӑн шурӑ хурӑнпа
Пӗр йышра вӑл паянтан.
Хӗпӗртерӗм ҫавӑнпа
Эпӗ пӗтӗм кӑмӑлтан.

*Александр Ильин*

**Пулӑра**

Йывӑҫ-курӑк типшӗрет,
Ҫав тери хӗвел хӗртет.
Атӑл тӑрӑх кимӗпе
Вӑштӑрти ҫил уҫҫипе
Аттепе ишетпӗр ирӗк,
Кӗсмене тытатпӑр ҫирӗп.
Тӑкӑнса юлать ҫут кӗмӗл
Шыв ҫине кӗсменсенчен.
Йӑлкӑшать хӗвелӗн хӗмӗ
Кӑн-кӑвак хумсем ҫинче.
— Пуллине вӗҫертмӗпӗр,
Тытӑпӑр, пӗҫерӗпӗр, —
Тет атте. Хӑй пӗкӗ евӗр
Авӑнать те спиннингне
Кӑларать туртса чӗнмесӗр
Йӑпӑрт-йӑпӑрт пуллипе.
Пӑсланать шӳрпе хуранӗ,
Хӑнана килме ан манӑр.
Карттуса пуҫран хывар,
Тав тӑвар юхан шыва.

*Людмила Симонова*

**Юмах ен**

Ку мӗн ҫӗршывӗ?
Юмах ен!
Камсен ҫӗршывӗ?
Ачасен!
Кунта ик арӑслан
Ҫӗре антарнӑ хӗвеле,
Кӑнтӑрлапа ялан
Унпа выляҫҫӗ пӳскелле.
Кунта кам аслӑ?
Ачасем!
Камсем хаваслӑ?
Ачасем!
Кунта шур упаран
Кашни ача илет парне:
Пире вӑл шӑнасран
Парать хывса хӑй кӗрӗкне.
Камсем юрлаҫҫӗ?

Ачасем!
Камсем ташлаççĕ?
Ачасем!
Кунта мулкачăсем
Пан-пан çапаççĕ параппан,
Слонсем те тĕвесем
Утаççĕ харăс хыçалтан.

*Юрий Сементер*

**Улăм, Хăмпă, Çăпата**

*(Вырăс халăх юмахĕнчен)*

Пурăннă тет пĕр ялта
Улăм, Хăмпă, Çăпата.
Пĕрре ешĕл çуркунне
Вĕсем кайнă сертене.
Пырсан-пырсан çул çинче
Курчĕç: улăх хĕрринче
Çырма юхать шавласа,
Сар хĕвелпе çуталса.
Мĕскер ĕнтĕ тумалла?
Мĕнле каçса каймалла?
Ларт пире эс ху çине,
Илсе каçар леш енне,
Хăмпăна пур кăмăлтан
Сăмах хушрĕ Çăпата.
Хăмпă пăхрĕ ун çине,
Туйрĕ йывăр пуласса.
Çавăнпа хăй сăмахне
Вăл пуçларĕ тăстарса:
Эп черченкĕ те çӳхе,
Пултараймăп хальлĕхе.
Çил вĕрсессĕн вĕçсе кайăп,
Манах тăвăр кайран айăп.
Хывăр каçă Улăмран,
Вăл маттур çĕр хут манран.
Улăм сăлтав шырамасть,
Ĕçрен тарма шутламасть:
Пулать каçă, çул уçать,
Уншăн хăй те савăнать.
Çырма урлă чи малтан
Каçма тивет Çăпатан.
Çинçе Улăм чăтаймасть,
Вăйĕ çук ун, йăтаймасть,
Хуçăлать вăл хăвăртах -
Шыва чăмать Çăпата.
Кулать Хăмпă лăхлатса,
Икĕ аллине шарт! çапса.
Кулнă май тулса пырать,
Сывлăшпа хăй чыхăнать.
Ахăлтатрĕ-ахăлтатрĕ,

Пычĕ-пычĕ карăнса,
Тӳсеймерĕ-çке, çатлатрĕ
Çитмĕл чĕлпĕклĕ пулса!

**Кам кĕнĕ пахчана?**

(Юмах)

Те ирпе, те каçхине,
Кампур çыврăнă чухне,
Тахăш кĕнĕ пахчана,
Йăкăртнă купăстана.
«Ах тур-тур! -
Тет Кампур. -
Вăрра халех тытмасан
Хамах лекет хуçаран».
«Кам-ши кĕнĕ пахчана?
Каласамччĕ эс мана», -
Ыйтрĕ вал Качакаран,
Шĕвĕркке мăйракаран.
«Ме-ке-кек! Ме-кек! Эп мар!
Эп пĕлместĕп, эп курман,
Кайса ыйт ав Сыснаран
Вараланчăк сăмсаран».
«Кам-ши кĕнĕ пахчана?
Каласамччĕ эс мана», -
Ыйтрĕ Йытă Сыснаран
Вараланчăк сăмсаран.
«Нăрăх-нăрăх! Çук, эп мар,
Купăста эп вăрламан.
Чăхсем кĕнĕччĕ унта,
Çавсем çине, тупата».
Картишĕнче шăй та шай,
Картишĕнче лай та лай.
Кампур вĕрет хăр та хар!
Чăхсем тараç чăл та пар!
Киккирикки сар Автан
Хăрамарĕ Йытăран,
Сиксе ларчĕ ун çине,
Сăхрĕ вăл çине-çине:
«Чăхсене ма хăвалан?
Тасаран ма айăплан?
Пахчана чăхсем кĕмен,
Купăста вĕсем çимен».
«Кам-ши кĕнĕ пахчана?
Каласамччĕ эс мана», —
Ыйтрĕ Йытă шур Хуртан,
Шур Хуртан тăсмак мăйран.
«Ки-как! —

кăшкăрчĕ шур Хур.
(Шартах сикрĕ ват Кампур.)
Пĕлейместĕп çав, курман,

Ыйтса пăх-ха Кушакран.
Çывăрмасть вăл каçхине,
Çав пĕлет кам кĕнине».
«Кам-ши кĕнĕ пахчана?
Каласамччĕ эс мана», -
Ыйтрĕ Йытă Кушакран
Йăлтăр-йăлтăр çут куçран.
Кушак шăртне тăратса
Сăмах хушрĕ чашкăрса:
«Хăвах çинĕ эс ăна.
Халех калап хуçана.
Вĕрентет-ха вăл сана
Сыхламашкăн пахчана».
Кам-ши кĕнĕ пахчана?
Йытă тăрать хурланса,
Качака — йăл-йăл кулса.

*Петĕр Эйзин*

**Тилĕпе Ула курак**

*Юптару*

Çăвать кăна япшар чĕлхеллĕ Тилĕ:
Ула куракăм, эсĕ маншăн пурнăç пилĕ!
Леш те юлсах каясшăн мар унран:
- Эс, Тилĕ тусăм, маншăн тăванран тăван.
Чунтан калатăп, хакли çук санран!
Хайхискерсем пĕрне-пĕри ачашшăн çупăрлаççĕ,
Пыл пек, çу пек сăмахсемпе мухтаççĕ...
Ват Чĕрĕп çак сăмахсене илтсен
Вĕсем патне йăкăртатса пырать хуллен.

Пикемĕрсем, сире ырă хыпар эп пĕлтерем:
Инçех те мар, шăп хамăр ĕшнерех,
Илемлĕх конкурсĕ пулать иккен,
Питех аванччĕ иксĕр те унта çитсен,
Пире талантăрпа тĕлĕнтерсен...

- Аха, - тет Тилĕ, - пит кĕтеттĕм-ха куна
Ку уявра, пĕлетĕр-и,
тивĕслипе хак параççех мана!
Тăхта-ха, чим-ха, - тет ăна Ула курак, унта
Эп пулмалла пĕрремĕш вырăнта!
Куна илтсессĕн Тилĕ тарăхса каять:
Пĕрремĕш вырăнта? Ай, катемпи!
Мĕнле вăл калаçать?
Сан пек айван мала ăçтан тухать?
Тин çеç пĕрне-пĕри мухтакансем
Çапла сапма пуçларĕç сив хĕлхем.
Куракĕ Тиллине хăрăмпала сăрлать,
Леш Курака çĕр чăтайми хурлать.
Тапранчĕ вăрманта шăй-шай,

Пур кайӑк тӗлӗнсе кӑна тӑрать... Ай-яй!

Туссем, хӑш чух илемлӗх вӑййинчен çапла
Пулса тухать камитлӗ япала.

*Елена Светлая*
*Юрий Сементер куçарнӑ*

**Шкула**

Çанталӑк тӳлек те капӑр
Хӗвел хӑпарать ташласа.
Чӗнет вӗренме сентябрь
Пире ӑшшӑн ырӑ сунса.
Сыв пул, ытарми, илӗртуллӗ,
Хаваслӑ каникул, сыв пул!
Паян ав каллех хӗпӗртӳллӗн
Уçать алӑкне савнӑ шкул.
Эпир çӑвӗпе кӗтнӗ мар-и
Çак чаплӑ, манми саманта.
Халь акӑ тинех çупӑрларӗ
Пире вӑл мӗнпур кӑмӑлтан.
Кашнин питӗнчех йӑлтӑр кулӑ,
Çиçеççӗ вут-хӗмӗн куççем.
Аван-и, юратнӑ шкулӑм,
Аван-и, туссем, тантӑшсем?!
Янрать шӑнкӑрав кӗмӗл саслӑн,
Ӑс-хакӑл пухма вӑл чӗнет.
Уçатпӑр телейлӗн, хавассӑн
Асамлӑ пӗлӳ алӑкне.

*Петӗр Çӑлкуç*

**Пире кирлӗ мир**

Аслӑ çӗр, ӗмӗр-ӗмӗр эс пурӑн,
Парнеле çынсене ырлӑх-пил.
Çут тӗнчемӗр юрлатӑр маттуррӑн,
Савнӑ çӗр, çавра çӗр - пирӗн кил.

Çӗр çинче пурӑнсан туслӑ халӑх
Хӑратаймӗ ӑна вутлӑ çил.
Пурӑн, çӗр, çыннусем савӑнмалӑх,
Савнӑ çӗр, çавра çӗр — пирӗн кил.

Сывӑ пултӑр этемлӗх кун-çулӗ:
Хӗвелтен, çӗр, ялан шевле ил.
Нихӑçан та ан юхтӑр куççулӗ,
Савнӑ çӗр, çавра çӗр — пирӗн кил.

*Аркадий Лукин*

**Калаçу**

— Атте, пит сивĕ-çке тулта паян,
Çил уççинче кăштах тăрсан
Кĕçех юр кĕлетке пулан...

— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕршыва вĕсем,
Пĕри те ăшă шырамаççĕ.

— Атте, ытла та шăрăх-çке паян.
Вĕри хăйăр çине выртсан
Ӳтӳ кĕç пиçсе кайĕ сан...

— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕршыва вĕсем,
Пĕри те сулхăн шырамаççĕ.

— Атте, сив çумăр ислетет паян,
Тăкать пуль тĕпсĕр каткаран
Тухан кăна — лачкам пулан.

— Çапла. Анчах та салтаксем
Хăйсен посчĕсенчех тăраççĕ.
Сыхлаççĕ çĕршыва вĕсем,
Пĕри те хӳтлĕх шырамаççĕ.

*Юрий Сементер*

**Юрататăп, аннеçĕм, сана**

Юрласа парар-и çепĕç юрă
Сарă хĕвел пек аннемĕре.
Ĕмĕр-ĕмĕр эсĕ сывă пурăн,
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

Ăнăçу та çут телей сунар-и
Йăлтăр çăлтăр пек аннемĕре.
Пĕр-пĕрне куçран пăхса кулар-и.
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

Тав туса ачашшăн ыталар-и
Хӳхĕм чечек пек аннемĕре.
Савăнса кăна ялан пурнар-и,
Ах, аннемĕр, эс пĕртен-пĕрре.

*Петĕр Çăлкуç*

**Çул уçрĕ Гагарин**

Никам та çитменччĕ
Тĕнче уçлăхне.
Гагарин çĕкленчĕ
Çӳле, тӳпене.

Вăл вĕçрĕ те килчĕ
Çĕр чăмăрĕ тавра.
Тĕнче кĕтсе илчĕ
Ăна, паттăра.

Çул уçрĕ Гагарин
Инçе, космоса.
Эй, юрă юрлар-и
Ăна мухтаса.

Пурте тав тăватпăр
Раççей çыннине,
Нихçан та манмастпăр
Ун чаплă ятне.

*Василий Давыдов-Анатри*

**Хĕвеллĕ Май**

Камăн Май илемĕшĕн
Кăмăлĕ çĕкленмĕ-ши,
Камăн пулас килмĕ урамра?!
Чыслă-сумлă ватăлăх,
Пирĕн харсăр çамрăклăх,
Юрă янăрать йĕри-тавра.
Вĕлкĕш, çут ялавăмăр, —
Яланах уявăмăр,
Савăнăçлă та ирĕклĕ
Юратнă çĕршывра.
Ĕç умне тăрсассăн,
Уява тухсассăн —
Çĕкленетпĕр пинĕ-пинĕпе.
Пурнăçăмăр тулăх,
Савăнăçпа пурлăх
Ĕмĕрлĕх туслашрĕç пирĕнпе.
Ĕçлĕ çын телейĕшĕн,
Мирлĕ кун илемĕшĕн
Тӳпене çĕклетпĕр ялавсем.
Шурă кăвакарчăн пек
Вĕçтĕр пирĕн юррăмăр,
Çиттĕр вăл кашни хула-яла.
Вĕлкĕш, çут ялавăмăр!
Яланах уявăмăр,
Савăнăçлă та ирĕклĕ
Юратнă çĕршывра.
*Николай Евстафьев*
**Çĕнтерӳ уявĕ**

Çунапа шуса хӗл иртрӗ,
Килчӗ ырӑ çуркунне.
Çӗнтерӳ уявӗ çитрӗ,
Юрлӑр унӑн юррине.

Юхса тӑтӑр уçӑ сасӑ
Инçете кайса ян-ян.
Аслӑ халӑхӑн хавасӗ
Пулмалла хитре паян.

Тӗпренех çапса аркатнӑ
Çакӑ кун вӑл тӑшмана.
Савӑнса Мускав янратнӑ
Салютпа пур таврана.

Саламланӑ та тав тунӑ
Халӑх паттӑрӗсене, —
Сывлӑх суннӑ, ырлӑх суннӑ
Хӑйӗн улӑпӗсене.

Савӑнса паллӑ тӑватпӑр
Майӑн тӑххӑрмӗш кунне.
Пурте харӑссӑн калатпӑр:
«Пултӑр Мир, Хӗвел, Анне»!

*Иван Малкай*

*   *   *

Чӑваш юрри — кӗсле юрри
Чӑваш тӗрри — кун-çул тӗвви.
Сас хыççӑн сас,
Йӗр çийӗн йӗр,
Чӗре кӗвви тӗрре кӗрет,
Тӗрре курсан юрлас килет.
Васкать, тимлет ӗçчен алли.
Пит-куçӗнче — хӗвел кулли.
Чӑваш-хресчен ака тӑвать,
Акнӑ тырри шӑтса пырать.
Сип-симӗс улӑх ешерет
Пыл хурчӗ нӑрласа иртет.
Кӗпе арки, саппун, сурпан
Тӗрлет Илем ан хыççӑн ан.
Сас хыççӑн сас,
Йӗр çийӗн йӗр,
Чӗре кӗвви тӗрре кӗрет,
Тӗрре курсан юрлас килет.

*Светлана Асамат*

**Кӗнеке**

Кĕнеке!
Эс — пире вĕрентекен,
Пысăк ăс парнелекен,
Ĕçлемешкĕн чĕнекен.
Кĕнеке!

Кĕнеке!
Эс — пире вăй кӳрекен,
Çĕнтермешкĕн пиллекен,
Çут малашлăх сĕнекен.
Кĕнеке!

Кĕнеке!
Эс — пире ӳстерекен,
Инçете вĕçтерекен,
Ĕмĕте çитерекен.
Кĕнеке!

*Ю. Сементер*

**Çĕнук**

Йăл! та йăл! кулать Çинук,
Телейли унран халь çук:
Çĕнĕ кĕпе, çĕн саппун,
Çĕнĕ сумка та пур ун.
Йăлтăр-ялтăр пушмаксем,
Тетрадьсем, кĕнекесем...

Ма-ши пухнă çак мула?
Каймалла кĕçех шкула.
Витлешетĕп: «Эй, Çинук!
Çинук мар эс халь - Çĕнук».

*В.Тарават*

**Кая юлсан**

Петĕр шкула хатĕрленчĕ.
Питне çурĕ, тирпейленчĕ,
Питĕ хăвăрт тумланса
Пăтă çирĕ васкаса —
Çитрĕ урока юлса.
Мĕншĕн-ха ĕлкĕреймерĕ?

Утнă май йăлт асăрхарĕ:
Кайăк вĕçнине сăнарĕ,
Йытă çурине сăйларĕ,
Кӳршипе те сăмахларĕ,
Вăхăчĕ вара кĕтмерĕ.

*С. Гордеева*

*(В. Кошкин куҫарнӑ)*

**Тыт мана**

Эй, чуп, хӑвала!
Пирӗнпе пӗрле выля!
Уруна мӗн-ма аран
Сӗтӗрсе утса пыран?
Чирлӗ-чӗрлӗ ҫын пекех
Эс ҫӳретӗн тек-текех.
Пул вӑр-вар, ан пул лӳппер,
Спортсмен пек эс ут чипер.
Эй, чуп, хӑвала!
Пирӗнпе пӗрле ...

*Г. Юмарт*

**Ураллӑ купӑс**

Купӑс тӳмисем ҫине
Пусрӗҫ Сантӑр пӳрнисем.
Тӑссан ҫеҫ пӗрмисене
Курӑнаҫҫӗ урисем.
Ун ҫине кушак ҫури
Тӗлӗнсе пӑхать, итлет.
Хӑлхаран ӑна тепри:
«Ку  ураллӑ купӑс», -  тет.

*Н. Карай*

**Лаша**

Урай тӑрӑх тӗпӗр-тӗпӗр
Ман лашам ҫӳрет.
Хушӑран вӑл тиха евӗр
Хыттӑн кӗҫенет.
Урхамах мана ӳкерчӗ,
Тарчӗ сак айне.

Ҫамкана сакпа лектерчӗ,
Ҫурчӗ кӗпене.
Лашама эсир пӗлетӗр
Каласан ятне.
Ман пичче —
Хаваслӑ Петӗр —
Унӑн вырӑнне.

*В. Эктел*

**Пукане**

Пӗчӗк тусӑм, пукане,
Ма ӳкертӗн пуканне?
Ӑҫта хутӑн урине
Пӗчӗк упа ҫуринне?
Ма тиркерӗн апатне:
Тутанман та салатне,
Упӗнтернӗ чашӑкне?
Ах, тирпейсӗр, ах, наян,
Мӗн хӑтлантӑн эс паян?
Малашне сана ялан
Ертсе ҫӳрӗп хампалан.

*Н. Симунов*

**Ӑмсанса пӑхать Кампур**

Автан килчӗ хуларан,
Автан килчӗ пасартан.
Паян питӗ пуян вӑл —
Тем чул тетте туяннӑ.
Пур ун халӗ параппан,
Пукане, пӳске, баян, |
Шӑнкӑрав та,
Кӑлтӑрмач та,
Урхамах та - тем те пур.
Савӑнпах ӗнтӗ, куратӑр,
Ӑмсанса пӑхать Кампур.

*П. Ҫӑлкуҫ*

**Алёнка теттисем**

Хушка кушак, путек,
Сар кӗпеллӗ пукане —
Харӑс темиҫе тетте
Хучӗ вӑл сӗтел сине.
Итлемеҫҫӗ теттесем,
Кушак ӳкрӗ урайне.

— Эп сана, Мӑрмӑр! — тесе
Вӑл кӑнтарчӗ пӳрнине.
Пукане ҫыхасшӑн мар
Сар ҫеҫкеллӗ тутӑрне.

— Пултаратӑн вӗт шӑнма, —
Тет Алёнка теттине.
Упине, ҫӑмламасне,
Ташлама хушать вӗҫрен.
Леш силлет вара пуҫне
Пружинсем пушаниччен.
Попугай, кӑвак сӑмса,

Аптратать Алёнкӑна,
Ни тӑмасть вӑл ҫакӑнса,
Йӑванма пӗлет кӑна.

—Ан пас эс хитре вӑййа, —
Тет Алёнка вӗрентсе.
Ашкӑнчӑк попугая
Тӑратать вӑл кӗтесе.

*Д. Гордеев*

ххх
Тӑн-тан! Тӑнкӑл-тан!
Тӑнкӑл-тӑнкӑл! Тӑнкӑл-тан!
Тӗлӗнтермӗш пукане
Парнелерӗ асанне.
Вырттарсассӑн ҫӗкленет,
Ташламашкӑн пикенет.
Кӗвӗлет кӑшт тайӑлсан:
— Тӑнкӑл-тӑнкӑл! Тӑнкӑл-тан!
(Выртма пӗлмен ҫак Ванюк.)

*М. Волков*

**Суха тӑватпӑр**

Павӑл тусӑмпа пӗрле
Тӳсме ҫук кӗрле-кӗрле
Тракторла вылятпӑр:
Суха сухалатпӑр!

Хамӑр чӗркуҫҫи ҫинче.
Пӗр каҫалӑк пуҫӗнче
Хирӗҫ ҫаврӑнатпӑр
Кӗр-рӗс! ҫапӑнатпӑр.

Ян! янрарӗ пуҫӑм ман,
Хӗлхем тухрӗ куҫӑмран...
Хӗрхенетӗп Павӑла —
Ҫулӑм хыпмӗ-ши ӑна?

*Н. Симунов*

**Улах**

Анне кайнӑ пасара,
Атте кайнӑ сунара.
Йӑмӑкпа пире улах.
Тӑрмашатпӑр хамӑрах.

Пӗҫерес улах пӑтти, —
Тет ман йӑмӑк Ултутти.
Вӑл кӗрпе илсе кӗрет.

Лăкăр-лăкăр! шыв вĕрет.

Кĕрпине ярас виççе —
Сарăлать кĕрпе пиççен.

Тăрăшатпăр йăмăкпа —
Пăтрататпăр кашăкпа.
Ак хушатпăр услам çу.
Питĕ тутлă. Чăтăм çук.

Пиçрĕ пăтă пăртакран.
Ак ларатпăр апата.
Ху пĕçернĕ апатран
Тутли çук пуль, тупата.

*В.Тарават*

**Пăрça хуралçисем**

Эпир, çамрăк ачасем,
Пăрça çиме кайрăмăр,
Хуралçине курсассăн
Çырмана тармарăмăр.
Уй хуралçи туяллă,
Ыйтрăмăр та, чармарĕ:
Çиййĕр, терĕ, хураллăр!..

Пусă вĕçне хăй кайрĕ.
Акă çырма пусĕнчен
Качакасем пăхаççĕ,
Хуралçăсем сисиччен
Симĕс пăрça вăрласшăн.
Пулькка йытă хăратсан
Качакасем шарт сикрĕç,
Хӳрисене тăратса
Аслă çулалла ӳкрĕç.
Эпир пăрça çирĕмĕр,
Карттуса тултартăмăр,
Йăмăксене патăмăр.

*М. Волкова*

**Пулăра**

Хураçка тусăмпала
Кайрăмăр эпир пулла.
Хĕвел хытă хĕртнипе,
Питĕ шăрăх пулнипе
Типсе кайнă пирĕн кӳлĕ,
Курăнмасть унта халь пулă.
Ак мĕнле иккен шăпа —
Кӳлленчĕкре ик шапа
Квакл атса лара парать,

Пиртен кулнăн туйăнать.

*Н. Карай*

**Карамель-тарамель**

Пĕчĕк йăмăкăмçăм Катя
Мĕншĕн çапла хăтланать-ха?
К вырăнне Т теет,
Мана пит тĕлĕнтерет.
Эп ăна чĕнетĕп: «Катя!»
Хуравлать мана вал: «Татя!»
«Кулă» тетĕп — «тулă» тет.
«Коля» тетĕп — «Толя» тет.

— Катя, Катя, ан васка,
Васкакан сикет вакка.
Уçăмлăн, хуллен К те.

— Тăнласам, пичче, Т теп.
— Юрĕ, тек ан тарăхтар,

Халĕ сăмахсем калар:
Кăнтăр!
Тăнтăр!

— Мăкăль!
— Мăтăль!
— Мăкăнь!
— Мăтăнь!
Карамель!
Тарамель!
Карусель!
—Тарусель!
— Куккурук!
— Туттурут!
— Татя, Татьăçăм, тала:
Мĕн тăвас ман санпала?

*П. Çăлкуç*

**Сăмах вăййи**

Кастрюльте, плита çинче,
Тутлă çеç яшка вĕрет.
Урамра, кил умĕнче,
Манăн тус Кампур вĕрет.

— Сивĕ, — тет вăл, — сил вĕрет,

Шăнтăм эп, Кирук, хытах.
Ман валли эс чей вĕрет,

Ӑшӑнасчӗ хӑвӑртрах.

*И. Малкай*

**Кӑвак ӳкерчӗк**

Петӗр ларнӑ шӑпланса,
Тем тӑвать хӑй тӑрӑшса.
Эпӗ пытӑм та пӑхатӑп,
Ак мӗскер унта куратӑп:
Кӑвак курӑк хушшинче
Кӑн-кӑвак чечек ларать,
Кӑвак хурӑн тӑрринче
Кӑвак шӑнкӑрчӑ юрлать.
Кассӑн-кассӑн ҫил вӗрет,
Кӑвак тырӑ хумханать.
Кӑвак тӗслӗ тӳперен
Кӑн-кӑвак хӗвел пӑхать...

*П. Эйзин*

**Лашапа Кашкӑр**

Пӗр кунхине выҫ Кашкӑр-кашаман
Тухать тӑрантармашкӑн хырӑмне.
Курать Лаша ҫӳренине.
Ун-кун шутланӑ-шутламан
Пӗр мел тупать,
Лаша патне пырса калать:
— Салам юдташӑма!
Юратчӗ-ши ыйтма?
Епле пурнан?
Е ӑнсӑртран сыв мар пулсан
Сана эп чӗртӗп самантрах.
— Эй, Кашаман,
Сурать-ҫке ман кайри ура, —
Калать Лаша выҫ Кашкӑра.
— Апла пулсан пӑхам ӑна...
Лаша патне пырать кӑна —
Хайхи тапать те ҫамкаран,
Кайса ӳкет выҫ Кашкӑр-кашаман.

Юхма Мишши

**Йӗп те пур,**
**ҫип те пур**

Пӑлтти-палтти
Сиккелесе кам ҫӳрет?
Куянсем.
Ак вӗсем.
Тупнӑ вӑйӑ, пӑхӑр-ха!

Пĕрин урлă пĕри,
Теприн урлă тепри...
— Ай!
— Мĕн пулчĕ?
Чăрсăрри,
Харсăрри
Турат сине лекрĕ.
Шăлаварне,
Чи хаклине,
Çурмаранах çурчĕ.
Ак инкек:
«Йĕп те çук,
Çип те çук.
Мĕнле саплас халь ăна?»
— Ним.
Йĕп те пур,
Çип те пур.
—Ăçта?
— Сип арлама
Эрешмен
Пит ăста.
Йĕппине,
Киввине,
Хăйне кирлĕ маррине,
Илме пулать чĕрĕпрен.
Йĕп тупрĕç,
Çип тупрĕç,
Шăлаварне сапларĕç.

*Г. Харлампьев*

**Тиха**

Сакăлта та чанккама,
Йăлтăркка, яка,
Юратать ачашланма
Уйăхри тиха.
Кунсерен ĕçе тухать
Амăшĕпеле —
Е кая тăрса юлать,
Е иртет каллех.
Çăмăл пултăр кăшт тесе
Юнашар утать.
Амăшĕ çавна сиссе
Çăмăлрах туртать.

*Ю. Сементер*

**Кушак çури**

Макăрать кушак çури,
Пылчăкланнă ун ури.
Хĕрхенет ăна Алюш,

Илсе парĕччĕ калуш.
Анчах темшĕн сутуçсен
Çук-çке пĕчĕк калушсем.
*Л. Сорокина*

**Сар чăх**

Кăнтăрла иртсен çуран
Сар чăх килчĕ пасартан.
Тем те пур ун сумкинче.
Хăй кăшт ырнă çул çинче.
Килсенех вăл чĕппине
Тăхăнтартрĕ сар кĕпе.
Картишне ыттисене
Сапса пачĕ сар кĕрпе.

*Н. Карай*

**Чанасем**

Кинеми мăрйи сине
Пухнă хĕл чанасене.
Ăшăнма урисене
Вĕсем чикнĕ мăрьене —
Кинемин вутти çунмасть,
Кăмаки вуçех туртмасть.

*Н. Карай*

**Путене**

Путĕр-путĕр путене
Савать тулă пуссине.
Ир пуçласа каçченех
Шăрантарать юррине:

— Пĕт-пĕл-тĕк те пĕт-пĕл-тĕк,
Çăкăр çиме пĕлен-тĕк
Çитĕнтерме пĕлмелле,
Хура-шурне тӳсмелле.

Ту суха, акса ӳстер,
Выр та авăрт эс, пĕçер.
Ан ӳркен çеç — пилĕк ав,
Халăх калĕ сана тав.

*А. Партта*

**Астутарчĕ**

Шурă сурăх пăранларĕ.
Шур путек çӳрет сиксе.
Кĕркури унпа вылярĕ
Тĕкĕшмешкĕн вĕрентсе.
Вăхăт иртрĕ сисĕнмесĕр,
Пысăкланчĕ шур така.
Çамки çинче шушкă евĕр
Икĕ пысăк мăйрака.
Пĕр кунне сак так! тутарчĕ
Хыçалтан Кĕркурине.
Ахăртнех, вăл астутарчĕ
Кам тĕкме вĕрентнине.

*А. Савельев-Сас*

**Уяр**

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, чăпар
Пĕчĕк чăмăр уяр
Мак пӳрне вĕçĕнчен
Анчĕ курăк сине,
Çумăра сиснĕрен
Хыпаланчĕ килне.

Хĕрлĕ-хĕрлĕ, чăпар
Пĕчĕк чăмăр уяр
Ав пытанчĕ епле!
Темех мар çурт çукки:
Шăнкăрав чечекки
Питĕ селĕм ӳпле.

*Н. Ишентей*

**Çумăр ташши**

Шăпăр-шăпăр, тăпăр-тăпăр,
Пултарулла эпĕ — пăхăр:
Ташламашкăн пикенсен
Мана çук та çитекен.

Пӳрт тăрри хитре те капăр,
Ташламашкăн питĕ такăр.
Чарăнмасăр савăнам,
Шăвăçа янраттарам.

Çĕр сине ак сиксе анăп.
Йывăç-курăк маншăн савăк.
Манпа туслă пурнакан
Ĕмĕр ырă куракан.

Вăй-хал пĕтрĕ, ывăнатăп,
Çĕр ăшне эп сăрхăнатăп.
Кăçалхи çу иртиччен

Ан мансамăр ман çинчен.

*А. Пăртта*

**Аслати**

Çиçрĕ çиçĕм йăлтăр-ялтăр,
Ал арманĕ кăлтăр-кăлтăр
Çынсăр-мĕнсĕр авăртать,
Сассипе хăй хăратать.

*В. Эктел*

**Асамат кĕперĕ**

Çичĕ тĕслĕ кĕвенте —
Те çухатнă хуçине
Чĕвен тăнă шыв сине,
Кармашать хăй пĕлĕте.
Ман унта çитесчĕ терĕм,
Чупрăм-чупрăм çитеймерĕм

*В. Эктел*

ххх

Пӳрт хыçĕнче ăшăра
Аçа кушак мăрлатать.
Çӳлте курак ушкăнра
Кăраклатса çуйăхать.
Чĕвĕл-чĕвĕл çерçисем
Хӳме çине сырăннă.
Унта-кунта эрешмен
Карта тытса çавăрнă.
Хĕвел çути йăвашрах,
Çуллахи пек ăшăтмасть.
Вăрманĕ те ав шăпах,
Кайăк юрри янрамасть.

*Хумма Çеменĕ*

ххх
Çитрĕç сивĕсем,
Шăнчĕç пĕвесем,
Мамăк пек шап-шур
Ӳкрĕ кăпăш юр.
Выртрĕ çĕр вара
Çывăрма тинех
Сивĕ çапасран
Тăлăп витĕнсех.

*А. Галкин*

**Ăсату**

Ял çумне çерем çине
Ларса тухнă кураксем.
Кăнтăра кураксене
Ăсатаççĕ чанасем.
— Чипер кайăр, кураксем! —
Çуйăхаççĕ чанасем.
—Чипер юлăр, чанасем! —
Янрашаççĕ кураксем.
Кураксем сиккелесе
Кар çĕкленчĕç тӳпене.
Юр пĕрчи вĕлтĕртетсе
Ӳкрĕ ман тута сине.

*Н. Карай*

**Юр**

Вĕлтĕр-вĕлтĕр
Вĕлкĕшеççĕ
Лĕпĕшсем.

Шурă чĕнтĕр
Пĕркенеççĕ
Урамсем.

Ушкăн лĕпĕш
Анса ларчĕ
Ал çине.

Сивĕ сĕлкĕш
Тулса ларчĕ
Çĕр çине.

Лĕпĕш мар-мĕн —
Вĕлтĕр-вĕлтĕр
Юр çăвать.

Эп каларăм —
Шăллăм пĕлтĕр —
Хĕл ларать.

*В. Эктел*

**Тăвайкки**

Хĕл Мучи çат чĕпĕтет
Хăлхана, пите.

Илĕртет-çке пурпĕрех
Тăвайкки пире.

Теветкеллĕн, тупата,
Чăнкă вырăнтан
Вирхĕнетпĕр тусăмпа
Çĕн çунашкапа.

Йыхăрать пире хĕлле
Тăвайкки куллен.
Ярăнатпăр тĕттĕмччен,
Кăмăл туличчен.

*Л. Смолина*

**Хĕллехи кунсем**

Ачасем лармаç килте —
Иртенпех тулта.
Каç та пулнă — халĕ те
Хĕвĕшӳ унта.

Пичĕсем хитре, кĕрен —
Пан улми майлах.
Урамран епле кĕрен
Ырмасан вăйлах?

Сывă пултăр çунашка,
Йĕлтĕрпе коньки!
Савăнар-и çакнашкал,
Ку вăл — чи пахи.

*Л. Афлятунова*
*(В. Енĕш куçарнă)*

**Тăвайкки**

Ак хайхи — тăвайкки
Уçрĕ мар-и кăмăла.
Çулне тупнă çунашки
Вирхĕнет çил çунатла.

Мĕн чул савăнăç куллен
Парнелет сив хĕл тĕнчи.
Киленет чун-чĕререн
Пирĕн ял ачи-пăчи.

*П. Çăлкуç*

**Хĕллехи хирте**

Хĕллехи уй-хир илемлĕ,
Калама та сук хитре.

Пин-пин йӑлтӑр ҫӑлтӑрсемлӗ
Курӑнать вӑл инҫетрен.

Илӗртет пире ир кӳлӗм
Ҫавӑнпа тӑван уй-хир.
Самантрах пушанӗ пӳлӗм
Йӗлтӗр сырӑпӑр эпир.

Вӗҫтерсе кӑна пыруҫӑн
Хыҫа юлӗ сил ачи.
Сывлӑш сиплӗхлӗ те уҫӑ
Султан пӑрӑн, Хӗл Мучи!

*Л. Смолина*

**Юр пӗрчи**

Тӗлӗрет уйра калча
Витӗнсе шап-шур юрпа.
Ешӗлскер шӑнмасть пачах
Кӑпӑшка кӑна тумпа.

Шӑнас ҫук-ха хурӑнсем
Шурӑ шупӑрлӑ вӗсем.
Сивӗ-ҫке юр пӗрчине,
Ҫав тери черченскерне.

*Л. Салампи*

**Пукане**

Пӗчӗк савнӑ пукане,
Кӗҫ килет ӗҫрен анне.
Эп ҫуман тирӗксене,
Пуҫтарман вырӑнсене.

Пуканеҫӗм, пукане,
Час кӗрет тултан анне.
Шӑварман чечексене,
Шӑлайман-ха урайне.

Пуканеҫӗм Кулине,
Пулӑшсам Маринене.
Тирпейлер-ха кил ӑшне,
Хӗпӗртетӗр ман анне.

*Л. Сорокина*

**Ташлать Илемпи**

Тулта сивӗ ҫил кашлать.

Пӳртре Илемпи ташлать.
Пăхать кантăкран сивĕ çил,
Пăхать, тĕлĕнет сивĕ çил:
Ташлать Илемпи, ташлать,
Шăвать вăл, ишет акăшла.
Хулне вылятать кĕвĕ май,
Пуçне вĕлт! ухать шунă май.
Алне Илемпи вăшт! сулать,
Ташланă май йăл-йăл кулать
Е вырăнтах вĕл! çаврăнать.
Сиксе тăпăрт-тăпăрт! тăвать.

*Р. Сарпи*

**Çуркунне**

Ылтăн хĕвел, сар хĕвел
Ирĕлтерет шур юра.
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать
Пирĕн касри урамра.

Палюк урам варринче
Пĕчĕк пĕве пĕвелет,
Сарă хĕвел ăшшинче
Юрла-юрла вăл ĕçлет.

Çут шыв тулать пĕвине —
Палюк чунтан савăнать.
Ярать пĕчĕк карапне —
Шывра карап ярăнать.

*В. Давыдов-Анатри*

**Чуччу**

Ăсталарăм пĕчченех
Эп паян чуччу.
Ярăнатăп киленсех,
Кăмăлăм — сар çу.

Савăнма пĕччен кичем,
Чĕнтĕм шăллăма.
Мĕн тери аван, туссем,
Иккĕн ярăнма.

*П. Çăлкуç*

**Чăваш ачи**

Чăваш ачи чăвашах —
Чунĕ ĕçре яланах.

Пĕр çул хушши сăпкара
Пиеленсе пиçĕхет.
Ик çул хушши вăйăра
Ирĕкленсе çитĕнет.
Виçĕ çула çитсессĕн
Витре йăтма вĕренет.
Тăват çула çитсессĕн
Тукмак тытма тĕлленет.
Пилĕк çула çитсессĕн
Пилĕк авма сĕмленет.
Ултă çула çитсессĕн
Уя тухса вĕçтерет.

*Н. Ыдарай*

**Эп хамах**

Никамран та маларах
Эп паян вăрантăм.
Вырăна та эп хамах
Майласа пуçтартăм.

Çăвăнтăм сивĕ шывпа,
Тăхăнтăм, тумлантăм.
Пĕчĕк симĕс лейкăпа
Чечексем шăвартăм.

Çинĕ хыççăн эп хамах
Чашăк-тирĕк çурăм.
Чăхсене те эп хамах
Апат пама тухрăм...

Эп халь пĕчĕк пепке мар,
Эп халь пысăк ĕнтĕ.

*П. Эйзин*

**Ӳкерчĕк**

Çĕнĕ пӳрт ӳкертĕм,
Турăм мăрйине.
Тухрĕ сар хĕвел те
Янкăр тӳпене.

Пĕлĕтсем шап-шурă,
Пысăк мĕлкесем...
Хумлă-хумлă тырă —
Анлă уйĕсем.

Яштака шур хурăн
Лартрăм çăл умне.
Сад ӳкерсе хутăм

Чӳрече умне.

Татӑк хут анчахчӗ
Тин çеç ман умра.
Пурнăç сăн-сăпачĕ
Чĕрĕлчĕ унра.

*Р. Сарпи*

**Наçтук**

Пирĕн Наçтук пит маттур,
Ĕненмесен кил те кур.
Чăхсене хăех пăхать,
Пахчана ирех тухать.

Чупа-чупа шыв йăтать,
Тирпейлет йăрансене.
Юрла-юрла тăрăшать,
Шăварать хăярсене.

Сар çăмха пек чĕпĕсем
Хĕпĕртеççĕ вăл тухсан.
Хура кушак çурисем
Сĕт кĕтеççĕ Наçтукран.

Нăрик-нăрик чух-чухне
Ачашласа ӳстерет.
Амăш килте çук чухне
Çупа çăкăр çитерет.

*Л. Сарине*

**Пĕчĕк Анна**

Чарăнмасăр ĕсĕклет
Пирĕн пĕчĕкçĕ Анна.
Кам-ши ĕнтĕ çав тери
Кӳрентернĕ-ха ăна?
— Шыв хĕррипе пынă чух
Темле пĕчĕкçĕ чĕр чун
Шăмпăрт! сикрĕ шывалла,
Путса вилчĕ пулмалла.
Пит шеллерĕм эп ăна, —
Тет йĕре-йĕре Анна.

*А. Васан*

**Кĕске ыйхăллă кушак**

Кĕске ыйхăллă кушак
Ир-ирех ĕçлет: шак-шак

Чӳлмекне ӳпне вырттарнӑ
Хӑймине унтан пуҫтарнӑ
Тарӑн тирӗкри аша
Ҫисе янӑ апӑрша.
Ларнӑ та вӑл сак ҫине
Тӑрӑшсах ҫӑвать питне.

Мӑр-мӑр-мӑр! Петюк, вӑран!
Пит нумай эс ҫывӑран.
Пӗл: ир таракан валли
Кӗреке ялан тулли.

*В. Тараваt*

**Кӳлӗре**

Хур чӗппи пӗрремӗш хут
Анчӗ кӳлӗ хӗррине.

—Шывалла пӗр шиксӗр ут,
Ан хӑра, — тет чӗппине
Амӑшӗ, унтан хуллен
Кӗчӗҫ тӗкӗр пек кӳлле.

Хур чӗппи путмасть иккен,
Ярӑнса ишет епле!
Хур ами хӗпӗртесе
Юнашар ишсе пырать,
Вӗрентни пӑсмасть тесе
Чарӑнмасӑр какалать.

*А. Ильин*

**Ыра ҫне**

Кӗтӳ ансан каҫхине
Хамӑр ӗне сассине
Эп таҫтанах паллатӑп,
Хапха умне тухатӑп.
Ӗне калать: «Му-ук, му-ук!
Мана илме хирӗҫ тух!
Хирте шӑрӑх пулнипе
Ӗҫес килет кунӗпе».

*М. Волкова*

**Чӗрӗп кулать**

Икӗ нӑрӑ чӗрӗпе
Йӗп сутаҫҫӗ пӗр ирпе.

Чĕрĕпĕ кулса ярать,
Кулнă майăн тавăрать:
«Эх, эсир ытла айван!
Эпĕ хам йĕпрен пуян.
Пĕтĕм пĕвĕм йĕплĕ ман».

*К. Чуковский*

**Пакша**

Йывăç тăрăх сиккелет
Çăмламас пакша.
— Эй, пăх-ха, илемлĕ те, —
Тетĕп юлташа.

Хăвăлне кĕрсе каять,
Мăйăр шĕкĕлчет;
Каялла сиксе тухать,
Чăйлатса илет.

Клентĕр евĕр хӳрине
Кукăртайнă хай,
Шăп пĕр çуллăх мăйăрне
Пуçтарайнă хăй.

*С. Шавли*

**Ула такка**

Чалтăра куç, чал сухал,
Кĕске кĕрĕк, пурçăн йĕм,
Мĕн шыратăн, мĕн сăхан,
Мĕн таккатăн, мĕн çиен?

— Эп шыратăп шĕкĕсем
Йывăçа хыт таккаса.
Пĕтчĕр йывăç мурĕсем,
Вăрман пултăр тап-таса.

*М. Сениэль*

**Путене**

Каçхине е ир енне
Тухăр тулă пуссине,
Итлĕр путĕр путенен
Янкăр уçă сассине.
Пĕт-пĕлтик! Пĕт-пĕлтик!..
Шăнкăрав пек чĕтренет.

Авăтать çине-çинех

Йăпăр-йăпăр путене.
Пĕлтерет вăл çынсене
Тулă хӳхĕм пулнине.
Пĕт-пĕлтик! Пĕт-пĕлтик!..
Хирĕпех халь илтĕнет.

*Ю. Петров*

**Çуркунне**

Ир иртет те, каç пулать,
Çуркунне те çывхарать.
Кунран-кунах ăшăтать,
Хĕвел çути сарăлать.

Сăрт тăррисем, вăрмансем,
Пĕтĕм çуна çулĕсем
Хуралаççĕ... Хĕл иртет,
Тусем урлă çу килет.

Ăшша хирĕç çӳçесен
Çурăлаççĕ кăчкисем.
Ялти пĕчĕк ачасен
Хĕпĕртеççĕ чĕрисем.

*Хумма Çеменĕ*

**Çавăнпа хитре тĕнче**

Сад пахчи шав ирĕлет,
Ешерет е хĕрелет,
Улшăнать куç умĕнче —
Çавăнпа хитре тĕнче.

Сивĕре те ăшăра
Тӳпене сăнать йăмра,
Кайăксем турат çинче —
Çавăнпа хитре тĕнче.

Ярăнса ырсан пурте
Эп вăр-вар кĕреп пӳрте,
Пур анне, атте, пичче —
Çавăнпа хитре тĕнче.

*А. Савельев-Сас*

**Çумăр умĕн**

Килчĕç çитрĕç пĕлĕтсем,
Килчĕç кĕрлесе.
Пĕчĕк çеç хур чĕпписем

Тарчĕç шимплетсе.
Кĕмсĕр-кĕмсĕр тутарса
Илчĕ аслати.
Килне тарчĕ пăрахса
Пирĕн кас ачи.

Алармань пек çавăрать
Çилĕ таврара.
Хăлтăр-халтăр тутарать
Ку вăл çумăра.

*П. Çăлкуç*

**Тĕтре**

Сĕт евĕр çăп-çăра тĕтре
Упаленет ирпе çĕртре.
Упаленет вăл, пĕтĕрнет,
Питрен ачашшăн сĕртĕнет.

Кĕçех хĕвел курăнмалла —
Тĕтре тарать çырманалла.
Шыв пек юхать, тĕлĕнмелле,
Унпа пĕве хăть пĕвеле.

*В. Енĕш*

**Уйăх ачи**

Çутă уйăх каçхине
Куртăм шыва кĕнине.
Чăмпăлтатать, çăвăнать,
Таса питшĕн савăнать.

Касса кайсах алхасать,
Мана куçран çутатать.
Чăтаймасăр çутине
Пăхса илтĕм тӳпене.

Ак тамаша, вăт тĕнче!
Уйăх хăй вырăнĕнчех.
«Ачи пулчĕ-тĕр шывра?»
Шухăшларăм хам ăшра.

*А. Пăртта*

**Иртрĕ кун**

Иртрĕ кун, хĕвел анать,
Вăл канма вĕçтерчĕ.
Тӳпери сар хунара

Тахăшĕ сӳнтерчĕ.

Сырса илнĕ тӳпене
Йăлтăр çăлтăр йышĕ,
Тинкереççĕ çĕр çине,
Куç хĕсеççĕ ăшшăн.

Тем тесен те çăлтăрсем
Хĕвелпе тăванлă:
Аппăш кайнă та — вĕсем
Вылямашкăн аннă.

*Л. Симонова*
*(Н. Теветкел куçарнă)*

**Çурхи илем**

Акă хĕл те иртсе кайрĕ,
Çитрĕ кăмăллă апрель.
Чыс туса ăна пуç тайрĕ
Сарă çӳçлĕ çут хĕвел.

Шевлипе вăл ачашларĕ
Ялсемпе хуласене.
Амăш евĕр çупăрларĕ
Чĕрекен çерçисене.

Хĕвеле сиссе вăранчĕ
Шăнкăр сасăллă шыв-шур.
Çурçĕрти килне ăсанчĕ
Ушкăн-ушкăн кайăк хур.

*А. Ыхра*

**Вĕреннĕ Лаша**

Кĕчĕ пӳрте Лаша
пĕринче.
Вĕреннĕ Лаша
Хыврĕ кĕрсенех
Пальтопа калуша,
Лаша иртнĕ май
перĕнмест сĕтеле.
Вăл ӳкермерĕ
Пукана.
Ак пычĕ, çывхарчĕ
хуллен ман ума.
Вара сывлăх сунчĕ мана.
Унтан
Манпа, Катьăпа, Петĕрпе
Ĕçрĕ вал чей чип-чипер.
Ним те тăкмарĕ вăл
хăй сине,

Вăл вар(а)ламарĕ
Сĕтел çиттине.
Шăп-шăпăрт ларчĕ,
Кĕçенмерĕ вăл хыттăн,
Хăй
Чей куркине
Тирпейлĕн тытнă.
Ак вăл тутăрпа тутине те шăлайрĕ.
"Тавах!", - терĕ те
Питĕ ăшшăн пуç тайрĕ.
Кӳрши еннелле çаврăнать
Пуç таймашкăн,
Каларĕ:
"Каçарăр,
Ман вăхăт каймашкăн.
Юлчĕç килте
Ман ачаш тихасем.
Çапах
Ачасем-çке вĕсем!"
Вара калушне,
Пальтине тăхăнса
Каларĕ:
"Тепре куриччен!"
Шак-шак! сасă çеç
Янраса юлайрĕ вара хыçĕнчен.

*Г. Спагир*

**Лăпкă çĕршывра**

Тулли кĕмĕл уйăх
Тахçанах çăвать
Сĕмлĕхпе хупланнă
Лăпкă çĕршыва.
Çавал шывĕ — тĕкĕр —
Ĕмĕт тӳпене.
Çыран тăрăх вĕтлĕх
Чӳхет кăтрине.

Акă унăн ешĕл
Кипки ăшĕнче
Сасăсем çĕкленчĕç
Кăвайт кутĕнче.
Тăлăпа çӳреççĕ
Унтах лашасем.
Тинкĕл-тин-н! юхаççĕ
Шăнкрав сассисем.
Кĕçех юрă тăсрĕ
Пĕри ушкăнтан.
Вĕтлĕх ахăлтатрĕ
Таврара — ян-ян...
Акă ахăр сасă
Вĕтлĕхрен тухса
Çавал шывĕ тăрăх

Вĕçрĕ улăха.
Çурхи улăх лăпкă,
Сывлăшра — таса.
Вăл хирех ăсатрĕ
Вĕтлĕхри сасса...
Тулли кĕмĕл уйăх
Паçăрах çăвать
Сĕмлĕхпе хупланнă
Лăпкă çĕршыва...
Çаплах улăх, хирĕ
Саспа чӳхенет.
Хĕлхемлĕ кăвайчĕ
Çунать те сӳнет...

*Н. Янкас*

**Туслăх сăмахĕ**

«Юрататăп» сăмах
Марилле янăрать,
Чăвашла янăрать,
Тутарла янăрать.
Вăл кашни чĕлхере
Чечек евĕр хитре:

— Ератем!
— Юратап!
— Яратам!

Юрă пек вăл ĕлккен
Кăмăла ăшăтать.
Пуçа йывăр килсен
Ырă шухăш парать.
Çав сăмах илтĕнсен
Савăнан чĕререн:

— Ератем!
— Юратап!
— Яратам!

Марие тĕл пулан,
Чăваша тĕл пулам,
Тутара тĕл пулан —
Тус-тăванлă пулан.
Хуть ăçта эсĕ пул,
Вăл сăмах — санăн çул,

— Ератем!
— Юратап!
— Яратам!

Хĕвелле, уйăхла
Вăл пире çупăрлать.

Ăсансассăн çула
Çăлкуç пек çутатать.
Туслашан унпалан —
Вăйли пулмĕ санран.

— Ератем!
— Юратап!
— Яратам!

Çакă пирĕн сăмах —
Виçĕ халăх тупи.
Çакă пирĕн сăмах
Харсăр туслăх тупи.
Туслашар, юратар —
Ĕмĕр-ĕмĕр пурнар.

— Ератем!
— Юратап!
— Яратам!

*С. Вишневский.*
*А. Ыхра куçарнă*

**Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем**

Тăван чăваш сăмахĕсем —
Мерчен те ылтăн пĕрчĕсем!
Шăтса вĕри чĕремĕрте
Пучах кăларăр пур çĕрте.
Ас вучĕпе, чун тарĕпе
Шăрçаланса куçа йăпатăр —
Пин-пин этем, тухатнă пек,
Килентĕр, тĕмсĕлтĕр, пăлхантăр.

Манми чăваш шеп юррисем —
Чĕкеç те шăпчăк чĕпписем!
Улахсенче, уявсенче,
Вăй картинче те ĕç çинче
Эсир ăшра чĕртсе хĕлхем
Вут кайăк пек çунат саратăр;
Пуссассăн йывăр туйăмсем
Хăюлăх, тӳсĕмлĕх паратăр.

Чăваш ташши — шевле ташши,
Шух çил ташши, çут хум ташши.
Санра хĕрӳ хĕвел ăшши,
Ăсталăх тупсăмĕ, тĕшши.
Эс илĕртсе куç пăвнипе
Авнать-çке пилĕк хулă майлă,
Ура вылять-çке çиçĕм пек.
Çĕр мăшăр çаврăнать сăпайлăн.

Чăваш йăли-йĕркийĕсем,

Сирте çĕкленӳпе илем!
Е сурхури, е çăварни,
Е калăм та сĕрен эрни,
Е çимĕк, шавлă акатуй,
Утçи, вырма уявĕ, туй!..
Тухья та шӳлкеме, тевет,
Масмак та çилкĕç, сĕлкĕ, сарă!.
Ак вăл чăвашлăх та тивлет,
Ак вăл ман халăх пархатарĕ!

*Ю. Петров-Вирьял*

**Кĕрхи сăнсем**

Ума вĕçсе ӳкрĕ
кĕр пĕлтерӳçи —
Хур ури пек хĕрлĕ
вĕрене çулçи.
Çут çанталăк шарт çеç
сикнĕн туйăнать,
Кĕркунне хыпарĕ
хăвăрт саланать.
Вăрмансем çаралчĕç,
уй-хирсем хура,
Кайăк хур саланчĕ
ăшă кăнтăра.
Йăмрасем те путрĕç
тарăн шухăша —
Упраса юласшăн
çуллахи ăшша.

*Н. Теветкел*

**Кĕр пасарĕ**

Кĕрхи чечек, йăмра эрешĕ,
Пĕрĕхтерсе пылне сапсан
Хĕлле валли апат илесшĕн
Сĕрлет, кĕшĕлтетет сăпса.

Сап-сар хĕвел чĕппи пек сарă
Пыл хурчĕ пăрахман ĕçе.
Кĕрлет кунта та кĕр пасарĕ,
Мухтать Çу панă çимĕçе.

*Н. Исмуков*

**Кĕрхи хурăн**

Шăпăрланнă хурăн
Çил лăсканăран.
Кил карти те хурлă,
Савăк мар урам.

Уйăхлă кĕр каçĕ
Тарăн курăнать,
Урăхла сăн пачĕ
Шурă хурăна.
Тухйине вăл хывнă,
Ылтăн тенкине
Сапаланă хунă
Кĕр арки çине.
Çил ăна пуçтарĕ
Кустарса ирпе,
Сиккипе хăй тарĕ
Шăхăрса хирпе...
Чĕтренет-и уçăм —
Хурăншăн пĕрех.
Маншăн çара пуçăн
Вăл илемлĕрех.

*М. Волкова*

**Сивĕтет çанталăк**

Ушкăн-ушкăн кайăксем
Мал енне васкаççĕ.
Йывăççен те çулçисем
Куллен çаралаççĕ.

Хир те тулăх кăкăрне
Çимĕçрен хăтарчĕ —
Ылтăн тырă вырăнне
Хăмăл çеç хăварчĕ.

Сарăлса пăхмасть хĕвел,
Сивĕтет çанталăк.
Кĕрĕ шартлама хĕле
Кĕç уçас пек алăк...

Сивĕ çилĕ тек улать,
Тутăхать çу тумĕ.
Çумăрĕ куллен çăвать,
Çăрăлать кил умĕ.

Сивĕ çилĕ уласа
Çу тумне тусарĕ.
Сивĕ çумăр юр пулса
Çĕр-шыва хупларĕ.

Умра акă — сивĕ хĕл,
Çĕр-шыв — çемçе мамăк.
Йĕлме йĕлтĕр — вĕлтĕр-вĕл-
Хатĕр хĕлшĕн манăн.

*Н. Янкас*

**Ула куракпа Тилĕ**

Миçе каланă вĕрентсе
Йăпăлтатни пăсать тесе
Анчах та йăпăлти çаплах
Çын чĕрине ирĕлтерет суйсах.

Сип-симĕс чăрăш тăррине
Ларайрĕ те Ула курак
Çиесшĕн пулчĕ апатне
(Вăл чăкăт тупнă-мĕн пăртак).
Тăхтарĕ, путрĕ тарăн шухăша.
Сисет те Тиле ыр шăрша
Йăпăлтатса чупса çитет, пăхать:
Куракĕ чăкăтне çыртса ларать.
Тиллин сасси хуллен чĕтрет:
«Ай-хай илемлĕ эс, хитре!
Мăю çинçе, куçу кăвар,
Юмахринчен те кая мар.
Тĕкӳ те пурçăн сан! Сăмсу тата, сăмсу!
Илтесчĕ, ангел сасси пуль — сассу!
Юрла-ха пĕр çавра, эс ан вăтан,
Юрру чăнах та лайăх сан.
Çак илемпе чи чаплă юрăçă пулан!»
Куракăн пуçĕ анраса каять,
Тил(ĕ) тус мухтанипе ун сывлăшĕ пĕтет,
Вара тип пырĕ тĕпĕпе кăраклатать.
Çăварĕнчи шур чăкăт лап! ӳкет,
Тилли — хыпать те вĕлт тăвать.

*И. Крылов. С. Шавли куçарнă*

**Улăпсем**

Пурăннă вĕсем сĕм авалах,
Хапăлланă ырă хавала.
Пулнă тет хăйсем шултра,
Атлантсем пек вăйлă та патвар.
Çичĕ çухрăм пулнă тет утти,
Çичĕ чалăш тăршшĕ — çăпати.
Хăтлăх кӳнĕ хăтсăр тĕнчене,
Тытнă теççĕ пурнăç тыткине.
Пĕлĕте çĕкленĕ тет çӳле
Ирĕккĕн хăйсем çӳремелле;
Ашăнмашкăн тупнă кăварне,
Шăрăх чух çутарнă çумăрне.
Вырăнтан куçарнă тет тăва,
Çĕн çулпа юхтарнă тет шыва.
Тĕнчене шыв илнĕ те — талан
Шавласа тăрайнă тет чылай.
Пур чĕр чун пĕтес патне çитсен
Улăп çăлнă тет путассинчен:

Хывнă та вăл хăйĕн кĕпине
Мăшăррăн тултарнă ун ăшне.
Тытнă тет пĕр вăхăт пĕлĕтре,
Шыв чаксан антарнă тет çĕре.
Пулнă тет кĕпи асамлăскер,
Çитмĕл çич тĕрпе тĕрленĕскер.
Иксĕлми вăй панă — хĕн килсен,
Çĕнеймен никам та — кĕрешсен.
Хăваланă вăл тăшмансене —
Татăлма паман тăван йăхне.
Йыхăрсан та ют çĕре Мерчен
Вăл кайман çуралнă çĕрĕнчен.
Савнă çĕрĕ пулнă хаклăрах,
Чăн телейĕ — хамăр халăхра.
Улăп ватăлса шуралнă та
Вырăн тупнă чаплă масарта:
Пĕчĕкçĕ ту евĕрлĕ тĕми
Нихăçан йăшса çĕтми-пĕтми.
Çав теме çине ларса кансан
Иксĕлми вăй-хал кĕрет-мĕн сан.
Йывăрлăх килсен çĕршывăма
Улăп хатĕр чĕрĕлсе тăма.
Çил çунатлă шурă утпала
Çĕкленсе вара вăл тухмалла.
Улăпăн тăпри асамлă тет:
Хытнă анана иккен имлет.
Мул тăпри тесе вара ăна
Ывçăн-ывçăн сапнă пахчана...

Улăп йăхĕнчен эпир, туссем!
Улăпла — эпир тăвас ĕçсем.
Халăх вăй илет улăпсемпе,
Пурăнар вĕсен хавалĕпе!
Тулăхрах сапса мул тăприне
Им-çамлар-и пурнăç йывăçне.

*Г. Юмарт*

**Тинĕс кукринче...**

*(«Русланпа Людмила» сăвăлла юмах сыпăкĕ)*

Пур тинĕс кукринче юман;
Ун çумĕнче пур ылтăн сăнчăр.
Пулать-и каç, çитет-и кăнтăр —
Ăслă кушак аçи ялан
Тек çаврăнать сăнчăрпалан;
Сылтăмалла кайсан — ун юрă,
Сулахаялла кайсан — юмах.
Унта тĕлĕнмелли тем курăн:
Ав арçури çÿрет; унтах
Турат çинче ларать пĕр вутăш;
Тухман, иртмен çулсемпелен

Курман, илтмен те кайăксен

Йĕр-паллисем выртаççĕ хутăш;
Унта пӳрт чăх ури çинче,
Çук алăк ун, çук чӳрече;
Унта мĕн çук-тăр хир-вăрманăн;
Кăвак çутпа унта капланнăн
Хум хăйăр çырана юхать,
Вара тара шывран — курсах тар —
Тухаççĕ вăтăр хӳхĕм паттăр,
Вĕсемпелех асли тухать;
Унта маттур король каччийĕ
Çул май мăнаçлă патшана
Илет-мĕн хăвăрт тыткăна;
Унта вăрман та тинĕс çийĕн
Тухатмăш пĕр пăхаттирех
Çĕкле каять куç умĕнчех;
Унта патша хĕрĕ салхуллăн
Ларать, мăнтарăн, тыткăнра,
Мĕн хушнине итле тăрать
Сăр кашкăр — ырă тусĕ унăн;
Унта тухатмăш карчăкпа
Çӳрет шалт тылă пĕр çулпа;
Унта Кащей патшанăн юнĕ
Типсех пырать çăткăнлăхпа;
Унта Русь сывлăшĕ... Русь чунĕ!
Çав шавлă тинĕс хĕрринче
Еçсе-çисе хăна эп пултăм,
Çав ешĕл юмана та куртăм;
Ăслă кушак ун айĕнче
Юмах каларĕ темĕнччен.

*А. С. Пушкин. А. Алка куçарнă*

**Хĕл пуçламăшĕ**

Шап-шурă юрĕ мамăк евĕр
Анать хуллен çеç тӳперен.
Хавхаланса сыратпăр йĕлтĕр —
Тухасшăн аслă уй-хире.

Анчах пĕрремĕш юр ултавлă...
Кăшт çеç хуплană шăн çĕре.
Çул-йĕр те хальлĕхе тумхахлă,
Хуçмашкăн пулĕ йĕлтĕре.

Эпир çавах хавас, хăюллă —
Юрпа перетпĕр пĕр-пĕрне.
Питре вылять пурин те кулă,
Мухтатпăр хĕл пуçламăшне.

*В. Эктел*

**Хĕлле...**
1

Январĕм виççĕмĕш çĕрне
Тин ўкрĕ юр. Ирех тăрайрĕ
Татьяна, кантăкран пăхайрĕ:
Шуралнă-мĕн лупас, карташ,
Чечек тăпри, хўме тавраш;
Çўхен шăнса тĕрленнĕ кантăк,
Кĕмĕлленеççĕ йывăççем,
Йăлт-ялт сикеççĕ чакаксем;
Сăртсем хĕл çиттипе хупланнă
Тирпейлĕн, кăпăш, çеп-çемçе;
Шап-шурă та çап-çутă çеç.

2

Хĕлле!.. Хресчен çынни хаваслăн
Çĕн çул хыват çунипелен;
Лаши юра сиссе вăраххăн
Лăстăртатать юрттипелен;
Ларман юра çурса сатуррăн
Пуçтах кўме вĕçет маттуррăн,
Тăлăппалан ун ямшăкки,
Вăл çыхнă хĕрлĕ пиçиххи.
Ав чупкалать ача хастаррăн —
Хăй пĕчĕк çунашки çине
Лартса çўрет вăл йыттине;
Там илнĕ пўрнине, мăнтарăн;
Пўрни сурать, хăй шав кулать,
Ун амăш кантăкран юнать...

*А- Пушкин. П. Хусанкай куçарнă*

**Йĕлтĕрпе**

Кăпăш юршăн хаваслантăм,
Йĕлтĕр сыртăм урана,
Хăвăрт шурăм, тапаçлантăм,
Сиксе тухрăм çырмана.

Шур сухаллă Хĕл Мучийĕ
Чĕпĕтесшĕн хăлхаран.
Чĕлтĕр-чĕлтĕр шур юр çийĕн
Ыткăнатăп пур вăйран.

Йĕлтĕрпех çўреп шкула та, —
Пур çĕре те йĕлтĕрпе.
Варсем урлă, вăрманта та
Йĕр йĕрлетĕп эп ирпе.

*Н. Харитонов*

**ххх**

Усă çилĕ чĕлтĕр-чĕлтĕр,
Юр пĕрчийĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр.
Йăлтăр-йăлтăр йĕлме йĕлтĕр
Çинçе йĕр çип çапнăн чартер,

Тăхтамасăр, хăпăл-хапăл
Хаваспах хире тухатпăр.
Хĕл Мучи пурне те хапал,
Кашниех хавхаллă, хатăр.

Хĕрхенмест хĕмне хĕвел те,
Хĕлхемне сапать пĕр вĕçĕм.
Ярăнма питех те меллĕ,
Туйăнать çунатсăр вĕçнĕн.

*А. Смолин*

**Çывракан ача**

Мамăк тӳшек çинче
Халь вăл шăппăн выртать.
Куç илеймĕн унран —
Епле тутлăн çыврать.
Çаврăнать-и хăш чух,
Хыттăнрах-и сывлать —
Ун ачаш тутине
Мăкăнь тĕсĕ çапать.
Пичĕ — йăлтăр улма,
Куçне хупнă йăлтах,
Кăшт йĕпеннĕ кăтри.
Çывăр, чĕппĕм, вăрах!
Тĕлĕкре тем курса
Пĕртĕн куç харшине.
Ыйхунта урупа
Сиртĕн виткĕçне.
Ман пепкем, ман çеçкем!
Пуканӳ аллунтах.
Çывăр, тутлăн çывăр!
Пӳрт шăпах. Сас-чӳ çук.
Ан калаç — пăшăлтат.
Хыттăнрах калаçсан
Вăл халех вăранать.
Шăппăн-шăппăн çӳре,
Сасă ан пултăрах,
Ан вăрат эс ăна.
Çывăр, чĕппĕм, вăрах!
Нăйкăшаççĕ пӳртре
Виçĕ чăрсăр шăна,
Хăвала тутăрпа —
Ан вăратчăр ăна.
Халь ак шăп таврара.
Амăш лăпкăн пăхать .—
Ун ачаш ыйхине

Чĕрипе вăл сыхлать.

*М. Джалиль*

**Пулăшакан**

Киле пĕччен тирпейлеме
Йывăртарах аннеçĕме.
Анчах эп харсăр хĕр ача,
Юлхавлăх ют мана пачах!
Часах пулать килте йĕрке...
Çума пуçлам-ха тирĕке.
Çăпалана, турилккене...
Туятăп кăшт ывăннине.

Çапла çусассăн пĕр-пĕччен,
Çук, ĕлкĕреймĕп эп ирччен.
Ирĕксĕрех сывлатăп ассăн:
— Аннеçĕм, пулăшсам, тархасшăн!

*Р. Минатуллин. А. Смолин куçариа*

**Наян Кампур**

Кампур шăрăхпала аптранă,
Хашкать вăл чĕлхине тăсса.
«Кун пек ĕç тухас çук-ха манăн
Вĕрентĕм ĕнтĕ халь ăса:
Хĕле кĕрсессĕн шур юртан
Тăватăп эпĕ хам çурта;
Вара чи пăчă вăхăтра та
Мороженăй çисе выртатăп», —
Шутлать вăл халĕ кашни кун,
Сăлтавĕ, чăн та, «пысăк» ун.
Анчах та сивĕ хĕл хаяррăн
Килсе çитсессĕнех, мăнтарăн,
Хĕссе лартать те хӳрине
Аса илет ăш çу кунне;
Уйăх сине пăхса хуллен
Йăслать вара куллен:
«Ах, сивĕ-çке! Çăва тухсан
Ятарласах шăмă пухса
Хама ваяли шур пӳрт лартатăп,
Вара хĕлле те ыр куратăп...»

Çапла çул хыççăн çул иртет.
Тума шутланă шур пӳрте,
Юлташăм, эс хăвах туян-тăр,
Кампур тăвать тет-ха паян та.
Ахальтен мар калать кӳрши:
— Кун пек наян ăçта пур-ши?
Шыраса пăхăр-ха, Кампур,

Тен, сирӗн хушӑра та пур?

*А. Калкан*

**Шӑна кӑмпин шӑпи**

Кӑрӑҫсене кӑмпаҫӑсем пуҫтарнине курсам
Сасартӑках шӑна кӑмпи те ӳкнӗ хыпӑнса:
— Эй! — тенӗ вӑл уҫланкӑна янраттарса, —
Мана мӗскершӗн уйӑратӑр туссенчен?!

Начар-им эп кӑрӑҫсенчен?
Сӑнран илес пулсассӑн та

Чылай капӑртарах-ҫке вӗсенчен?..
Анчах тем каласассӑн та
Кӑмпаҫӑсем
Илсе кайман ӑна — килӗштермен:
— Сӑнран кӑна хитре ҫав эс,
Ашу усал! — тесе
Вӑрман варнех ӑна хӑварнӑ тӑратса вӗсем.

Сӑмахсӑрах ӗнтӗ ӑнланмалла:
Шӑна кӑмпин шӑпи пулаймӗ урӑхла!

*А. Галкин*

**Ҫурхи тӗнче**

Хӗвел куҫа йӑмӑхтарать:
Пайӑркисем ытла та каскӑн.
Аппа пир тӑрӑхӗ сарать
Шур юр пек шур чаршав тумашкӑн.

Ула кушак пек ҫул ула.
Хуралчӗ Арапуҫ кӗперӗ.
Хуракӑш ҫулӗ пек юлать
Сукмак, хир урлӑ хывнӑскерӗ.

Пӗр ӑшӑтать, пӗр сивӗтет
Ҫурхи ҫанталӑк — йӑлӑнтармӑш.
Анчах ман чунӑм хӗпӗртет:
Хӗртет хӗвел — ҫу кунӗн амӑш.
Ҫак ирӗклӗ ҫурхи тӗнче
Улӑштарать пек хамӑра та.
Эп пӗчӗк аслӑк тӑрринчен
Мӗнпур ҫут тӗнчене куратӑп.

*Н. Исмуков*

**Ҫуркунне пуҫланать**

Çурхи çепĕç çилпе
Юр йăшать хăвăртах.
Тупăшать хĕвелпе
Хĕл Мучи кăлăхах.
Хĕллехи ыйхăран
Пур тавра вăранать.
Инçетри ват вăрман
Хуп-хуран курăнать.
Кайăксем юррине
Янратма пит хавас.
Çуркунне çитнине
Систересшĕн пулас.

*Л. Смолина*

**Ешĕл шав**

Килет-чашлать ем-ешĕл шав,
Ем-ешĕл шав, çурхи чĕр шав!
Сĕт такса янă евĕр щуррăн
Чие сад-пахчисем лараççĕ,
Кашлаççĕ ерипен;
Хĕвел ăшшишĕн савăннă
Хырсем лараççĕ кăмăллăн,
Хуллен çеç кашласа.
Çумрах вĕр çĕнĕ ешĕллĕх:
ара шупка çулçишĕн
Çака ларать хаваслăн
Юрлать шап-шурă хурăн
Ем-ешĕл çивĕтпе!
Шавлать тин шăтнă курăк,
Шавлать çӳл вĕрене...
Тавра вĕсен йăлт çĕнĕлĕх,
Çурхи хаваслă çĕнĕлĕх... '
Килет-чашлать ем-ешĕл шав,
Ем-ешĕл шав, çурхи чĕр шав!

*Н. Некрасов. Г. Ефимов куçарнă*

**Çурхи вăйă**

Тулта шавлать хĕвеллĕ çур,
Ăсатрăмăр хĕле!
Тавралăхри шап-шурă юр
Васкавлăн ирĕлет.

Шывсем лупашкасем тулли
Кĕрлеççĕ; урамра
Ача-пăча вăййи-кулли
Пĕр чарăнми янрать.

Мĕн чухлĕ савăнăç килет
Çуркуннепе пĕрле!
Тултан кĕрес килмест киле,
Вăййи те тем тĕрлех.

Ав кăлтăр-кăлтăр авăрать
Тахшин арманĕ, кур.
Унтах карап ишсе пырать,
Шур çилкĕçи те пур.

*Уйап Мишши*

**Йытăпа Кушак**

Кушакăн шартлама хĕл варринче
Вутти пĕтсе çитет,
Выртасчĕ кăмака çинче,
Анчах сив кирпĕч хытă чĕпĕтет!
Ăшша вĕреннĕ Кушака
Пит ырах мар-мĕн шăннă кăмака.
Тек тусеймест хайскер, пӳртрен тухса
Йăпăлтатма пуçлать Йытта курса:
«Салам, пускилĕм!
Ма-а вĕрен?
Пит майлă мар-им сивĕре?»
«Сана аван! — тет Йытă тарăхса. —
Эс ăшă кăмака çине
Выртан та хăпарса
Туймастăн сивĕ хĕл кунне».
«Туятăп çав, туяп, Хураçка тус!
Шеллеп сана... Анчах пуçна ан ус,
Куç паянах эс ман пата!
Пурнар-ха, тупата,
Чунтан килĕштерсе,
Çут тĕнчене тĕлĕнтерсе.
Парах çак шăтăк кил-çурта,
Шăнса вилетĕн эс унта...
Тăхта!
Пĕр шухăш кĕчĕ ман пуçа:
Пул ман килте халь эс хуçа,
Вут тат та хăв пӳртне пăсса
Тек пурăн кăмака хутса!»
Суйса курман нихçан та Хураçка,
Шанать вăл Кушака.
Куçать те ун патне
Сӳтсе тăкать хăйĕн пӳртне.
Хĕл каçиччен вăл вут татса
Хутса пурнать Кушак кăмакине.
«Ава-ан! - тет Кушакки мăрăлтатса,
Мухтать вăл халь Йытта: —
Сан пек маттур тус тупас çук ниçта!
Мĕнле хастарлă эс! Мĕнле ĕçчен!

Пĕрле пурнасчĕ виличчен!..»
Анчах та çуркунне çитсен
Хуса ярать ăна хăй килĕнчен.

*Александр Калкан*

**Тăрна ташши**

Вăранман-ха йăлтăр кӳлĕ,
Тул çути кăшт палăрать.
Шăплăха сирсе ир кӳлĕм
Кайăк-кĕшĕк сас парать.
Кăрăл-кăрăл-кăрăлтик!..
Вăштăр-вăштăр-вăштăртик!..
Çунатпа сулкалашса
Пур тăрна тухать ташша.
Йĕркипе карталанаççĕ
Шыв хĕрне, çерем çине,
Пуç ухаççĕ, çаврăнаççĕ
Вылятса урисене.
Кăрăл-кăрăл! кĕвĕлеççĕ
Çăмăл ташă çеммине,
Ташламашкăн вĕрентеççĕ
Тăрнасем чĕпписене.

*Юрий Петров-Вирьял*

**Çу çитрĕ**

Тӳпеми пулмалăх тулчĕ
Çырмана сĕт пек тĕтре.
Нурĕк сыпрĕ курăк-çулçă
Ăмсанса ăна хитрен.

Улăха утсем анайрĕç
Симĕс курăк çимине,
Шурă тĕтрене сăнарĕç
Пухăнса пĕр тĕмене.

Кĕрсе кайрĕç те таптарĕç,
Ах, ăна тăват уран.
Тăскаларĕç ярăм-ярăм
Аната çити туран.

*Георгий Фёдоров*

**Çулла**

Шăрăх. Пăчă. Питĕ йывăр. Çук вăй-хал. Май çук тӳсме.
Çил вĕрменнипе пăрахрĕç çулçăсем вĕлтĕртетме.
Тахçанах çуман та çумăр, типсе ларнă çырмасем,

Чечексем шанма пуҫланӑ, сараласҫӗ ҫулҫӑсем.
Сарӑхма пуҫланӑ ҫулҫӑ йыхӑрать ачасене,
Сулхӑнра та ҫук-мӗн канлӗх, чупмалла пӗве патне.
Пулӑ пек чӑмпӑлтатаҫҫӗ ачасем ҫав пӗвере,
Ҫырана вӗсем тухаҫҫӗ каҫ пулсассӑн, ӗнтрӗкре.
Пӗр кӗтмен ҫӗртен, сасартӑк, сулхӑн перӗнет пите.
Уҫӑ сил вӗҫсе килет-мӗн ӗнтрӗк пуснӑ уй-хиртен.
Катара ҫуталчӗ пӗлӗт, пӗлӗт тулчӗ ҫиҫӗмпе,
Аслати кӗрлет канмасӑр, тӗнчене кисретес пек.

*Габдулла Тукай*
*Валерий Туркай куҫарнӑ*

**Чи савӑнӑҫлӑ кун**

Мӗншӗн Петӗр хӗпӗртенӗ,
Пичӗ-куҫӗ йӑл кулать?
Иртенпех лара пӗлмесӗр
Уткалать те чупкалать.
— Вӑхӑт ҫитрӗ пуль, каяр-и? —
Васкатать вӑл пиччӗшне.
Пӗр уҫать-и, пӗр хупать-и
Хӑмӑр питлӗ сумкине.
Ак шкула вӗҫтерчӗ Петӗр,
Пичӗ-куҫӗ йӑл кулать.
Халь эсир ӑна пӗлетӗр:
Иккӗмӗш класа каять.

*А. Алка*

**Савнӑ ҫӗр, Чӑваш ҫӗршывӗ**

Авалтан эпир юратнӑ
Пархатарлӑ Атӑла,
Ун шывне нумай хумхатнӑ
Тӑвалла-анаталла.

Пирӗн халӑх ӗмӗтленнӗ
Кун курасшӑн малашне.
Сӗм вӑрман пире пилленӗ
Сиплӗ уҫӑ сывлӑшне.

Ӗмӗр хыҫҫӑн ӗмӗр иртрӗ,
Шухӑш вӗҫрӗ аякка.
Ӗмӗтленнӗ ӗмӗт ҫитрӗ:
Пирӗн ҫул-йӗр сарлака.

*П. Хусанкай*

**Ҫӗршывӑмӑр пуҫламӑшӗ**

...Сан килӳ Вӑтакасра,

Хамăр кас ялан асра.
Çавă-ши çĕршывăмăр?
Çав та, çав кăна та мар:
Анаткас та пур ялта,
Турикас та пур тата;
Вĕсенче те ачасем,
Пĕр класра ларакансем.
Хамăр ял вĕçне тухсан
Эс çеремлĕ çул куран;
Çав çулпа утсан-утсан
Эс шоссе çине тухан.
Çулăн икĕ хĕррипе
Йывăç лартнă йĕркипе;
Тикĕс сарнă çулпала
Унталла та кунталла
Ыткăнаççĕ машинсем —
Çăклисем, çăмăллисем.
Тĕлĕнсе пăхса тăран.
Ачасем аташасран
Аслă çулăн хĕррине
Юпа лартнă, ун çумне
Шĕвĕр пуçлă ик хăма
Çырса çапнă вулама.
Пĕр хăми çине Канаш
Тесе çырнă çав юлташ,
Теприне вал пит катмар
Авса хунă — Шупашкар.

*П. Хусанкай*

**Савăнăç**

Савăк, савăк, савăк
Çутă тирексем.
Çутăлчĕç вĕсем çинче
Хĕрлĕ чечексем.

Савăк, савăк, савăк
Тĕксĕм хурама.
Çавăнпа та ун çинче
Туп-тулли хурма.

Çумăр мар çăвать çӳлтен,
Çиçкĕнмерĕ çиçĕм.
Тăкăнса тăрать çӳлтен
Витĕр пиçнĕ иçĕм.

Йăмрасем çинче курак
Шăпчăкла юрларĕ ак.
Тăра шыв пал-пал тухать.
Пыл пек тутлă вăл юхать.

Турткăш пулчĕç чăхăсем,

Кăтра пуçлă — кукшисем
Ватă шыв арманĕ те
Ташлама пуçларĕ тем.

Çĕкленет юхан шывран
Асамат кĕперĕ.
Чупăр, чупăр ман хыçран,
Кам мана çĕнтерĕ?

*К. Чуковский*

**Чĕрĕп**

— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Мĕн тăвать вăл çĕрĕпе?
— Мĕн пултăр-ха Чĕрĕпе —
Йĕп шутлать вăл çĕрĕпе.

— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Ма йĕрет вăл иртенпе?
— Мĕн пултăр-ха, ир енне
Вăл çухатнă йĕппине.

— Мĕскер пулнă Чĕрĕпе?
Ма кулать вăл кунĕпе?
— Хăрăк йĕпсен купине
Хыр айĕнче курнипе!

*Н. Ыдарай*

**Çырлана кайсан**

Мĕскер пулнă Сантăра?
Макăрать уçланкара,
Пиччĕшне чĕнет:
—Пи-и-чче-е-е!
Янăрать вăрман:
«Пи-и-чче-е-е!»
Çырлара пиччĕшĕнчен
Çĕтсе юлнă вăл пĕччен.
Çил килет те Сантăра:
— Ан хăра, — тет, — Ан хăра.
Хăрамасăр! Çывăхрах
Пат! ӳкет турат çĕре.
Çулçă чаштăр тусанах
Чарăнать тапма чĕре.
Хĕвел хурăн тăрринчен
Анчĕ шĕшкĕлĕх çине,
Шăппăн тĕмĕ хыçĕнчен
Тилĕ тухрĕ ун умне.
- Пĕчĕк тусăм, ан хурлан,
Ма йĕрсе куçна пăсан?

Кĕç килет пиччӳ. Унччен
Çул хĕрне тухса ларар.
Хам та ыртăм çырлара, -
Вăл йăпатрĕ Сантăра
Лăпкаса çурăмĕнчен.
Тухса ларчĕç çул хĕрне —
Пысăк тунката çине.
Тилĕ лăпкăн юптарса
Тĕрлĕрен юмах калать.
Куçне мăч та мăч хупса
Сантăр тутлăн анаслать.
— Юмах пĕтмĕ.
Кăшт канар, — терĕç,
Выртрĕç юнашар.
Ыйхă пусрĕ Сантăра —
Сантăр путрĕ ыйăха.
Сас илтсессĕн çывăхра
Тилĕ чăмрĕ чăтлăха.
Çырларан килекенсем
Асăрхарĕç Сантăра,
Тăчĕç тунката тавра.
— Кам ку? — теççĕ. — Хăш ялсем?
Тен, вăл хамăр патрисем?
Пысăк тунката çинче
Сантăр канлĕн çывăрать.
Пĕчĕк çӳхе тутинче
Ăшă кулă палăрать.

*Н. Карай*

**Сывă пул, çу кунĕ**

Сывă пул, хавас çу кунĕ,
Сывă пул.
Халь кĕтет пире пурне те
Савнă шкул.
Сар хĕвел кăштах ĕшеннĕн
Туйăнать.
Кунсерен кая юлса вăл
Вăранать.
Çитрĕ, çитрĕ, килсе çитрĕ
Кĕркунне.
Хурăн тăхăнчĕ илемлĕ
Кĕпине.
Сывă пул ĕнтĕ, çу кунĕ,
Сывă пул.
Шкул енне выртать çап-çутă
Утма çул.

*П. Эйзин*

**Кĕр ирĕ**

Салам сана, сап-сарă тумлă,
Пуян та çутă кĕркунне!
Кучченеçпе сĕтел халь тулăх,
Савăнтарать пире парне.
Яла ак çитрĕ капăр кайăк —
Сар пĕсехеллĕ кăсăя.
Çерçи чĕвĕлтетни те лайăх, —
Ан кайтăр ăшă кун сая!
Шкул умĕнчи сип-симĕс чăрăш,
Анне пек, пил сăмах калать:
— Пĕр ӳркенми вĕрен эс, тăрăш,
Вĕреннĕ çын мала каять!
Салам сана, хавас кĕр ирĕ!
Савăнтаратăн эс чунтан!
Нихçанхинчен те туслăн пирĕн
Ăс пухмалла тăван шкулта.

*В. Ямаш*

**Симĕс хуралçă**

Сар тутăр çыхнă вĕрене
Шкула чупать пек вĕренме.
Чупать çилпе ăмăртмалла:
— Кайри — мала! Кайри — мала!
Лăс чăрăш — ватă асатте,
Ларать мăнаçлăн пĕр çĕрте.
Хĕлле пулать-и е çулла —
Ялан вăл симĕс тумпала.
Пăхсан салтак пек курăнать,
Пĕрмай вал хуралта тăрать.

*Н. Теветкел*

**Кĕркунне**

Савнă ял урамĕнче
Çулçăсем ташлаççĕ,
Кĕркунне çитни çинчен
Шав хыпар сараççĕ.
Тĕрлĕрен кăпшанкăсем
Сивĕпе халь çĕтнĕ,
Мăкăнь питлĕ уйăпсем
Хĕл каçмашкăн çитнĕ.
Ешĕл çулçă — кăсăя
Кантăка шаккарĕ,
Хĕлĕпех килти сăя
Тутанма шутларĕ.
Çут çанталăк пăсăлать,
Пĕрĕхет сив çумăр.
Ватă йывăç хурланать,
Халь юлать вăл тумсăр.
Ял çыннийĕ хĕпĕртет:
Кĕреки ун тулăх.

Пурлăхпа хĕле кĕрет,
Мĕн-ха кирлĕ урăх?

*В. Аптраман*

**Кĕркунне**

Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Вĕçен кайăк сассинчен
Хуйхă кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайăксем
Вĕçрĕç тинĕс леш енне.
Хывнă ĕнтĕ йывăçсем
Пурте сарă тумтирне.

*К. Иванов*

**Чăрсăр автансем**

Пĕр ирхине
Ик сар автан
Пĕр харăс курнă тулă пĕрчине.
Эп куртăм чи малтан! —
Пуçланă янрашма пĕри.
Çук, эпĕ!  тенĕ тапăнса тепри. —
Кĕçтет-им сан пуçу?!
Пуçланă акăш-макăш çапăçу.
Ăна çерçи илтсе
Кĕç пынă та сиксе
Сар тулă пĕрчине
Кап! хыпнă та вĕçтерне йăвине.
Сисмен çакна «мăнаçлă» автансем,
Çерçи сăмси пек тулăшăн вĕсем
Юнпа пĕветнĕ пĕр-пĕрне.
Туссем! Ун пек ан пулăр ĕмĕрне!

*А. Кăлкан*

**Лапăрчăк**

Панă Марука тетрадь,
Хăй сăрлать те хăй çырать.
Ку вăл    чăрăш, ку — така,
Ку вăл — каçăр качака.
Ку   мучи, сухаллăскер,
Ку вăл — пўрт, мăрьеллĕскер.
—  Ку тата, Марук, мĕскер,
Ăнланса илме çукскер:
Вун ураллă,
Вунă майракаллă?

— Ку вăл — Лапăрчăк,
Çыртаканскер.
Хам шутласа тупрăм.
— Ма пăрахрăн тетрадьне,
Ӳкерместĕн ыттине?
— Лапăрчăкран хăратăп.

*К. Чуковский*

**Пулăра**

Камшăн — хуйхă,
Камшăн — кулă:
Вăлтапа тытатпăр пулă.
Кирлĕ мар пире атма —
Вăй çитмест ăна йăтма.
Меслетне аван пĕлетпĕр;
Вăлтана ăман тиретпĕр,
Ывăтатпăр авăра —
Пулă кĕттермест вăрах!
Çыранти мĕнпур пулла
Кушак тусăм хураллать.
Ай чăнах та пултарать:
Пуллине вăл тултарать
Пысăк савăт вырăнне
Хăйĕн пĕчĕк хырăмне!

*Н. Симунов*

**Вăт епле вăл пулăшать**

Таньăн ĕçĕ сахал мар,
Таньăн ĕçĕ пит нумай.
Пулăшрĕ вăл шăллĕне:
Çирĕ унăн канфетне.

Ах, мĕн чухлĕ Таньăн ĕçĕ:
Таня çирĕ, Таня ĕçрĕ.
Амăшпе пĕрле кăшт ларчĕ,
Асламăш патне уттарчĕ.

Ыйхăларĕ те каларĕ:
— Мана хăвăр салтăнтарăр:
Ывăнтăм. Тăрап аран.
Пулăшăп сире ыран.

А. Борто

**Кенттипе Мишша**

— Атя, Кентти, урама
Çĕнĕ хӳме сăрлама.

Çĕнĕ хӳме çĕн чусран,
Чипер пулĕ сăрласан.

Кур ак темĕн самантра
Икĕ кӳршĕ пахчара.

Хĕвел çаврăнăш тымарĕ
Сăрламалли милке мар-и?

Чим, асту, хуçмалла мар
Пĕрле иккĕн кăларар.

Тăприне кăшт силлесен
Милке хатĕр малярсен.

Сăрне ăçтан илмелле,
Ăçта ирĕлтермелле?

Шывĕ пур çут витрере,
Сăр та пур ав кĕтесре.

(Там пулин те ирĕлсен
Сăр пекех вăл тĕсĕнчен.)

Икĕ кӳршĕ ик маляр
Ĕçе тытăнчĕç хастар.

Ирĕлтернĕ тăм хухать —
Хӳме хуп-хура юлать.

Ашшĕ тухрĕ ак пӳртрен:
— Эй, сире! Ăçта вĕлтрен?

Туссем юлчĕç хăтăлса
Пусма айне пытанса.

Кур, ăнлан аслисене!
Пулăшас тен вĕсене!

Тав сăмахĕ вырăнне
Лектеретчĕç вĕлтренпе!

*Е. Афанасьев*

**Çӳпçе**

Чаплăран та чаплине,
Хаклăран та хаклине
Хунă хăйĕн çӳпçине
Пирĕн ватă асанне.
Акă вăл тухья, хушпу —

Тăхăнмашкăн хатĕр пул!
Çутă кĕмĕллĕ тевет,
Шӳлкеме куçа çиет.
Çамкаран çыхма масмак,
Вĕттĕн ташлама пушмак.
Икĕ аркăллă кĕпе
Пурçăнпа тĕрленипе
Питĕ хӳхĕм курăнать.
— Тăхăнса кăтарт ăна!
Асанне туй тумĕпе
Çамрăкланчĕ пĕтĕмпех,
Хăйĕн ăшă куллипе
Чăннипех те Туйпике.
Пул эс сывлăхлă куллен,
Ан чирле, çӳре хуллен
Эп ӳссе çитĕниччен,
Ман туйра савăниччен!

*И. Малкай*

**Пыл хурчĕ**

Вăл килне вĕçет пин хут
Пыл йăтса мăн улăхран.
«Вĕлле хурчĕ — ылтăн хурт», —
Теççĕ ăшшăн халăхра.
Мĕнле çын-ши хăй çинчен:
«Вĕлле хурчĕ пек ĕçчен», —
Тенине илтсен çуталмĕ,
Хаваспа чĕри ун тапмĕ?

*Н. Тимаков*

**Кĕтӳç**

Ял хыçĕнчи çеремре
Симĕс курăк ешерет.
Ватă кĕтӳç Мĕкĕте
Унта пăрусем кĕтет.
Мучи ырă та япшар:
Аллинче ун пушă мар,
Пĕчĕкçĕ шăхлич кăна.
Çавăнпа пуль çав ăна
Юратаççĕ пăрусем:
Ачаш, çепĕç çав вĕсем!
Аслă ялăн варринче,
Çӳллĕ каланча çинче,
Шăп вун ик сехет çапсан
Мучи шăхлич каласа
Кĕç пухать пăрусене,
Йыхăрать шыв хĕррине:
— Утăр, утăр ерипен,
Кайăпăр халь тапăра.

Шăнкăр-шăнкăр Шетмĕрен
Шыв ĕçтерĕп пурсăра.

*А. Калкан*

**Юр**

Эпир, юрсем, пит çăмăл,
Çил вĕрнине итлетпĕр,
Вĕлтĕртетсе çаврăнса,'
Сиксе-вĕçсе çӳретпĕр;
Çил-тăвăлтан хăраса
Таçта-таçта çитетпĕр,
Ăçта çитнĕ вăл тĕле
Шурă чаршав витетпĕр.
Пирĕн ĕмĕр вăрăм мар,
Ăна лайăх пĕлетпĕр;
Хĕвел хĕрте пуçласан
Эпир часах пĕтетпĕр.

*Н. Шелепи*

Хĕллехи каç

Пĕлĕте хуплать çил-тăвăл,
Пăлтăр-палтăр çавăрать;
Е выç кашкăр пек улать вăл,
Е ача пек макăрать.
Пирĕн пӳрт кивелнĕ, тĕксĕм,
Хурлăх унăн ăшĕнче.
Ма шăплантăн, кинемейçĕм,
Шăннă кантăк умĕнче?
Юрласа кăтарт таçта пĕр
Кăсăя пулни çинчен,
Юрласа кăтарт-ха сар хĕр
Шыв ăсма анни çинчен.

*А. Пушкин*
*(П. Хусанкай куçарнă)*

**Хĕллехи вăрман**

Çаппа-çара йывăççем
Шавламасăр лараççĕ.
Пас айĕнчи туратсем
Темле мăннăн курнаççĕ.
Унта-кунта кĕрт çинче
Тилĕ чупни палăрать.
Çукмак пекки пур çĕрте
Йĕлтĕр йĕрри тăсăлать.
Сисмен хутран пуç çине
Юр чăмакки ӳккелет.

Çăка тăрри çилпеле
Лăстăртатать, силленет.

*Хумма Çеменĕ*

**Юр пике**

Тин çеç çунă шур юртан
Юр пике тăватпăр.
Йăмăх хура кăмрăкран
Мăшăр куç лартатпăр.
Акă пĕлĕт хыçĕнчен
Сар хĕвелĕ тухрĕ,
Юр пикен ик куçĕнчен
Çут куççулĕ юхрĕ.

— Мĕншĕн эсĕ, Юр пике,
Куççульпех йĕретĕн?
Сар хĕвелĕн ăшшипе
Хăвăрт ирĕлетĕн?

— Манăн пĕчĕк тусăмсем,
Çуркунне çывхарчĕ, —
Юр пике пире йĕрсе
Шăппăн ăнлантарчĕ.

*В. Эктел*

**Юратнă анне**

Кам-ха пире юратса,
Ачашласа, йăпатса,
Лăпка-лăпка ӳстерет,
Çунат пиллет, вĕçтерет?
— Юратнă анне.

Кам-ха эпир чирлесен,
Япала-мĕн çĕмĕрсен,
Начар, юлхав вĕренсен
Куçне хупмасть каçсерен?
— Юратнă анне.

*В. Давыдов-Анатри*

**Тумла**

Сас парать çурхи тĕнче:
Шыв тумлать пӳрт умĕнче.
Мĕншĕн-ха тумла тумлать?
Йывăçа мĕскер калать?
Вăл калать тирексене:
«Ăшă сил килет тинех».

Вăл чĕнет кураксене:
«Таврăнăр тăван ене!»

Вăратать упасене:
«Кăнтăр çĕрĕн ăшшине
Илсе килчĕç кураксем,
Иртрĕç ĕнтĕ сив кунсем!»

Шыв тумлать пӳрт умĕнче,
Вăранать çурхи тĕнче.

*Калина Малина*

**Пăр каять**

Кĕпĕрленсе, кĕрлесе,
Сĕлтĕшленсе, сĕрĕшсе
Çырмасенче пар каять.
Йăлтăр-йăлтăр курăнса,
Шăкăлтатса калаçса,
Шăнкăртатса, шавласа,
Пĕрне-пĕри хăваласа
Пыра-пыра капланать.
Эх, çуркунне, çуркунне
Савăнтарать пурне те!
Вут хунă пек çунтарать
Вăл юрне те, парне те.

*Н. Шелепи*

Çуркунне

Хĕвеллĕ кун. Таса тӳпе
Утмăл турат чечекĕ пек.
Тăрин илемлĕ юррипе
Янрать хир-улăх иртенпех.
Сĕрлеççĕ улмуççи çинче
Канма пĕлмен пыл хурчĕсем.
Ача-пăча сăрт çамкинче
Тамран тăвать тетте çуртсем.
Хĕвел сапать хăй хĕлхемне
Ялсем сине те улăха.
Вăрман симĕслетет тумне,
Кĕрнек кӳрет тавралăха.

*Н. Мартынов*

**Пăши пăрушĕ**

Чăтлăх вăрман варринче,

Шур çӗмӗртлӗх ăшӗнче,
Пăши пăрушӗ тăрать,
Ярса пусма та хăрать.
Витере мар, ирӗкре,
Ирӗкре те хӳтлӗхре.
Тин çуралнă, пӗчӗкскер,
Хăмăр кăвак тӗслӗскер.

*М. Волкова*

**Кăткăсем**

Сӗм вăрман кашланăçем
Хӗвӗшеççӗ кăткăсем.
Купалаççӗ пӗрисем
Тӗрлӗ çапă-пӗрчӗсем.
Сӗтӗреççӗ теприсем
Хурт-кăпшанкă пикенсе.
Эх, мăнтарăн кăткисем
Кун каçа мекеçленсе
Ывăнаççӗ пуль хытах.
Ма канмаççӗ-ши кăштах?

*А. Хум*

**Улай**

Çырмара вылянă чух
Тупрăм эпӗ йыт çури.
Пӗчӗкскер сывлатчӗ чух —
Хуçăлнă кайри ури.
Йăтса кайрăм эп ăна
Хăвăртрах больницăна.
— Йыт çурин тяппи аманнă,
Çыхса яр, Анюк аппа... —
Эмел сӗртӗм кашни кун.
Кӗç сывалчӗ йыт çури —
Сыпăнчӗ хуçăк ури.
Халӗ акă пыр та кур —
Мӗнлерех Улай маттур!
Кил-çурта сыхлать тата
Хураллать хăех сада,
Çывăха ямасть юта.

*Р. Сарпи*

**Текерлӗк**

Тӗвик-тӗвик текерлӗк
Лара-тăра пӗлмерӗ,
Яра куна çӳрерӗ.

Kaçпала вăл ывăнчĕ.
Киккирикĕ ывăнчĕ-усăнчĕ.
Улăхра çӳре-çӳре
Урисем йĕпенчĕç,
Курăка сире-сире
Çунатти ĕшенчĕ.
Тĕвик-тĕвик текерлĕк
Ма çаплах çӳрерĕ?
Утă тултрĕ йăвине.
Ăшă халь чĕпписене.

*М. Стельмах*

**Сар автан**

Авăтать автан:
«Киккирикку-ук!»
Кăшкăрать тултан:
«Тар часрах, Кирук!
Сывлăм типиччен
Вăранас пулать.
Ыйхă чăптинчен
Сар хĕвел кулать;
Йăпăр-япăрах
Тумланать Кирук.
Кĕтнĕ пит вăрах
Сар киккириккук:
Чăн çар пуçĕ пек
Хăйĕн йышĕнче
Уткалать тек-тек
Kaçăркка пичче.
Çумĕнче çӳрет
Вун пĕр кăт-кăтик.
Йăл та ял çиçет
Хĕрлĕ киккирик.
Апатпа тухсан
Йыхăрчĕ Кирук.
Савăнчĕ автан:
Ки-киккирикку-ук!

*П. Эревет*

**Тивес мар**

Мучи хăртнă варринче
Ларчĕ пĕр самант канса.
Упасем хыр хыçĕнче
Тăчĕç шăппăн калаçса.

Çури: «Атьăр мĕкĕрсе
Мучие, — тет, — хăратар».
Ăна амăшĕ пӳлсе:

«Ватта, — терĕ, — тивес мар».

*Н. Карай*

**Хурлăхан, ан хурлан**

— Хурлăханăм-хурлăхан,
Ма çĕрелле усăнан?
— Лутра пĕвĕм ӳсменрен...
Çырлам пиçсе çитмесрен.
Сулхăн сывлăм ӳксенех
Эп йĕретĕп ирсерен.
— Хурлăханăм-хурлăхан,
Уншăн эсĕ ан хурлан.
Ак пиччепе сан тавра
Вĕрлĕк карта тытрăмăр,
Уснă пуçна майласа
Унтан уртăнтартăмăр.
Кĕлеткуне пуçтарса
Пилĕклесе çыхрăмăр.
Хĕрӳ хĕвел пăхтăрах —
Çырлу пиçĕ хуп-хура!..
Текех ĕнтĕ ан хурлан,
Çут хĕвелпе маттурлан.

*М. Волкова*

**Кулĕ**

Ярăм-ярăм сапрĕ
Хĕвел çут хĕмне.
Кулĕ шывĕ çакрĕ
Кĕмĕл теветне.

Лăпкă сил хускатрĕ
Вĕтĕ хумсене.
Тевет çинчен татрĕ
Çутă тенкине.

Вĕлт те вĕлт çухалчĕç
Татнă тенкисем...
Ак каллех çуталчĕç -
Шыв çинчех вĕсем.

*Р. Сарпи*

**Каç пулчĕ**

Хĕвел анчĕ, тĕттĕмленчĕ,
Çырма-çатра пытанчĕ,
Сăрт тăррисем шĕвĕрĕлчĕç,
Симĕс вăрман хуралчĕ.

Канлĕхе хурал тăма
Уйăх тухрĕ шуралса.
Таса хирсем, тӳлек шывсем
Кайрĕç хуллен çуталса.

*Н. Шупуççынни*

**Малтанхи аслати**

Кăнтăрлахи тӳпе уярччĕ,
Çуса тасатнă пек таса.
Анчах та пĕлĕт кăвакарчĕ,
Таçтан вăл тухрĕ капланса.
Нӳрелчĕ сывлăш. Çут çанталăк
Шав тĕттĕмленчĕ ерипен.
Ял çумĕнчи лаштра çăкалăх
Шăп пулчĕ пек. Тем сисрĕ тен.
Сасартăк аслати сассийĕ
Шартлатрĕ шăплăха татса,
Вара вал кайре улăх çийĕн
Кĕмсĕртетсе, кăлтăртатса.
Пуртсем çине çывхарнăçемĕн
Шĕвелчĕç тĕксĕм пĕлĕтсем.
Пуçланчĕ шăпăр-шăпăр çемĕ,
Ташларĕç кĕмĕл пĕрчĕсем.

*А. Алка*

**Çумăр ташши**

Пысăк ялăн çийĕнче
Пысăк пĕлĕт чарăнчĕ,
Ун йывăр кутамккинчен
Çумăр пĕрчи сапăнчĕ.

Шăпăр-шăпăр юрласа,
Тăпăр-тăпăр ташласа
Ак пĕри çĕре сикет,
Ак теприйĕ сирпĕнет...
Шăппи-шаппи, пăтти-пат,
Çара ура çăтти-çат.

Йывăç тăрри, пӳрт тăрри,
Курăк тăрри, шыв тăрри
Çумăр пĕрчипе пĕр харăс
Тапăртатса-шапăртатса,
Çатăлтатса юлтăр-и?

*С. Асамат*

**Çуллахи ир**

Шупка шурӑмпуҫӗ
Шуса хӑпарать,
Ирхи ҫӑлтӑр вучӗ
Сӳнсе ҫухалать.
Йӑлтӑр сывлӑмланчӗҫ
Чечек-курӑксем,
Ҫерем ҫине анчӗҫ
Уйри кӗтӳсем.
Ҫӳлелле шӑваҫҫӗ
Кӑвак тӗтресем,
Улӑха васкаҫҫӗ
Хурсен картисем.
Хӗвел курӑнайрӗ —
Ҫӗршыв савӑнать:
Ял ҫынӗ вӑранчӗ,
Ӗҫе тытӑнать.
*Ҫ. Элкер*

**Утӑра**

Куян ашшӗ утӑ ҫулать,
Пӗр сулсан капан пулать.
Куян амӑш уттине
Купалать лавсем ҫине.
Пӗчӗкҫеҫҫӗ ҫурисем —
Катӑк-кӗсӗк хӳресем —
Тек кумаҫҫӗ ҫулпала
Кӳмепе калла-малла:
Турттараҫҫӗ уттине
Васкаса ҫӗн йӑвине —
Канлӗ пулӗ, ҫеп-ҫемҫе,
Ан ӳркен кӑна ӗҫе.

*А. Костецкий*

**Хирте**

Куҫпа виҫейми,
Вӗҫне ҫитейми
Хӗрри-йӗррисӗр
Ыраш хумханать.
Аслӑ тинӗс пек,
Канлӗх пӗлмен пек,
Ылтӑн тумӗпе
Хумне хӑвалать.
Лӑпкӑн вылятса,
Савса, юратса
Тулли пучаха
Ӑш сил чуптӑвать.
Ҫӳлтен, пӗлӗтрен —
Ҫутӑ хӗвелтен
Ылтӑн тинӗсе

Хӗлхем тăкăнать.
Ана пуçӗнче,
Тымар ăшӗнче,
Вăрттăн сасăпа
Путене юрлать.
Ылтăн тинӗс пек
Е сӗм вăрман пек
Хусканан тырра
Сасси ачашлать.
Пӗт-пӗл-тӗк!
Тутарса илет,
Çутă, ыр ӗмӗт
Хресчене сӗнет.

*Г. Тал-Мăрса*